К84.09(=Чув)
Ж 73
Ч-44182

Николай Жирнов-Ибресь

# Вӑйӑран вӑкӑр



Калавсем

Национальная библиотека ЧР
4-044182

Обязат. экз.
К84.09(=Чув)
Ж73

Николай Жирнов-Ибресь

# ВӐЙӐРАН ВӐКӐР

Шупашкар
2011

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-4
Ж 73

**Ж 73** **Жирнов-Ибресь Н.Т.**
**Вăйăран вăкăр.** — Шупашкар, 2011. — 76 с.

И-44182

© Жирнов Н.Т., 2011



# ТУМАН ТИХА ПИЛĔКНЕ ХУҪСАН

***Калав***

Хальхи саманара садпахча ĕҫĕ тупăш кӳреймест пулин те, Юрий пĕррехинче хаҫатра «Дача сутатăп!» текен пĕлтерĕве курсан нумай шутласа тăмарĕ. «Туянас!» – терĕ.

Дачи ҫырма хĕрринче иккен. Вырăнĕ аван. Ăҫта мĕн лартмалли ҫинчен шутласа тăнă чух ун патне вăтам ҫулсенчи арҫын пырса тăчĕ.

– Салам! Пускилсем пулăпăр малашне. Гурий! – аллине тăсса пачĕ хайхи.

– Юрий!

– Мĕн лартас тетĕн пахчунта?

– Малтанхи хуҫан ҫĕр ҫырли лаптăкĕсем питĕ селĕм курăнаççĕ. Вĕсене пăхсах тăрăп. Чие, слива, пан улми йывăççисем те ӳстерĕп.

– Мĕн усси-ши сан ҫырлусенчен? Помидор тесен вăт урăх калаҫу. Йăран ҫинчен тӳрех татса ҫиме те, тăварлама та, яшка пĕҫерме те меллĕ, тĕрлĕ салат-винегрет тума та аван.

– Кама мĕн ĕнтĕ, кашнин хăйĕн ирĕкĕ.

Ҫакăнпа сăмах-юмах вĕҫленчĕ.

Юрий тепĕр куннех Патăрьелĕнчи улма-ҫырла питомникĕнчен тĕрлĕ хунав илсе килчĕ. Ҫĕр ҫырли йăранĕсене кăпкалатса тухрĕ. Ешĕл апат-ҫимĕҫ – сухан, ыхра, салат, петрушка, укроп, редис, кăшкар ути – валли те вырăн тупрĕ, помидорне те манса хăвармарĕ.

Гурий вара пӗтӗм пахчине помидор лартрӗ.

– Акӑ куран-ха, – терӗ вӑл мӑнкӑмӑллӑн, – витри-витрипе помидор татӑп. Пасарта сутса кӑна 10 пин тенкӗ тупӑш илес шухӑш пур...

Ҫу кунӗсем сисӗнмесӗрех иртсе пычӗҫ.

– Ну, мӗн, пускил, пухрӑн-и ҫырлусене? Пӑх-ха, ман помидорсем мӗнле парка ӳсеҫҫӗ, – каллех йӗкӗлтерӗ Гурий Юрие тӗл пулсан.

– Кашни ҫимӗҫӗн хӑйӗн вӑхӑчӗ. Манӑн та пахча пушах выртмасть-ха, эпӗ те пуҫтарса илӗп ҫимӗҫсем, ви-таминсӑр пурӑнмӑпӑр.

Чӑнах та, каланӑ пекех пулчӗ. Ҫӗр ҫырли питӗ ӑнчӗ. Ҫавтери нумай пулнӑран ниҫта вырнаҫтарма пӗлмерӗҫ, вара пасарта сутма шутларӗҫ. Витри-витрипе йӑтрӗҫ, ҫынсем тупӑшса тенӗ пек илеҫҫӗ. Вӑтӑр витре сутрӗ Юрий мӑшӑрӗ. Укҫипе купе-шкап туянчӗҫ. Вӗтӗрех ҫырласенчен варени пӗҫерчӗҫ, компот хатӗрлерӗҫ.

Пӗр кунхине кӳрши патне каҫрӗ вӑл.

– Мӗнле пурӑнатӑн, Гурий юлташӑм? Помидорна пуҫтарса кӗртме те ӗлкӗрнӗ эсӗ, маттур, – ҫап-ҫара тӑрса юлнӑ пахча еннелле куҫ ывӑтрӗ Юрий.

– Каккуй унта пуҫтарма! Мӑшкӑлласа ан тӑр-ха куҫ умӗнчех. Пӑх-ха хӳме леш енне. Ав ӑҫта выртаҫҫӗ ман помидорсем. Тем пулчӗ, йӑлт хуралса-ҫӗрсе пӗтрӗҫ. Пӗтӗмпех ҫумласа пӑрахма тиврӗ. Ҫур кун йӑтрӑм ҫырмана аврисемпе помидорӗсене, – хаш! сывларӗ Гурий...

Туман тиха пилӗкне хуҫма юрамасть иккен. Хӗрхенсех кайрӗ Юрий Гурие.

– Атя-ха ман пата. Помидорӗ ман хамӑн та ӑнмарӗ. Пӗр-икӗ банка варени, кӑштах ыхра-сухан парса ярам сана, – терӗ куларах.

Гурин Юрий хыҫҫӑн утмалли ҫеҫ юлчӗ.




Ĕç хыççăн хăш-пĕр водительсем яланхиллех хĕрлĕ кĕтесе пухăнаççĕ. Кам домино шаплаттарать, кам бильярд шаклаттарать. Сăмах çаптаракан та тупăнать. Шапăлти Юра, тĕслĕхрен.

– Вăт ĕнер, атьсемри, пĕр фуфыркăна çаклатрăм. Малтанах – пырса ан çулăх ун çумне, кӳреннĕ пек тăвать, анчах хăйне мĕн кирли к-çĕнченех курăнать. Çинерех тăтăм та, ирĕлсех кайрĕ – иксĕмĕре мĕн кирли пулчĕ те.

– Шапăлти эс, Юра. Те ĕненмелле сана, те çук, нихăçан та пĕлеймĕн.

– Ыттисем темле те, çапах эп хамăн арăма шанатăп, – калаçăва хутшăнчĕ Володя. – Вăл ника-ма та парăнас çук.

– Э-э, Володя, арăмпа нихçан та мухтанма кирлĕ мар. Мăйракине пытарсан та, шуйттан-шуйттанах вăл, – тĕртсе илчĕ тахăшĕ.

– Эп пĕлнĕрен калатăп, – кăмăлсăррăн хуравларĕ Володя.

– Айта, тавлашар? – сĕнчĕ Юра. – Пĕр каçрах парăнтаратăп. Е эсĕ пĕр ещĕк çак ушкăна лартатăн, е – эпĕ. Пырать?

Володя иккĕленсе тăчĕ. Ыттисем умĕнче аван мар пек туйрĕ. Чăнах та мухтаннă пек пулса тухать капла. Ирĕксĕрех килĕшме тиврĕ.

– Юрать, килĕшетĕп. Анчах мĕнле пурнăçлар ку ĕçе?

– Эс командирована кайнă пекки ту. Вăл ĕçе кайсан таврăн та пытанса лар. Мăшару манпа килĕшнĕ самантра тухма пултаратăн.

Тепӗр кунне Володя ҫывӑрса тӑнӑ-тӑман мӑшӑрне хӑй командирована каясси ҫинчен пӗлтерчӗ.

– Зина, мӗн те пулин хатӗрле-ха унта, – хушрӗ вӑл, – ик-виҫ кунлӑха инҫе ҫула тухатӑп.

Зина ун пек чухне мӗн кирлине яланхиллех хӑвӑрт хатӗрлерӗ те чипер ҫул сунса упӑшкине ӑсатрӗ. Хӑй ҫапах та тӗлӗнчӗ: «Ун пек чухне Володя командирована каясса каҫхинех пӗлтерсе хураканччӗ-ҫке?..» Ҫак иккӗленуллӗ шухӑшсемпе ӗҫе кайрӗ Зина. Лӑк тулли автобусра пӗр ушкӑнри арҫынсем хӑйсен ҫывӑхӗнче тӑракансем илтмеллех калаҫса лӗхлетеҫҫӗ, Зина илтсе юлнӑ тӑрӑх, такамсем пӗрин арӑмӗ пирки тупӑшнӑ имӗш. Тата вӗсенчен пӗри Юра ятлӑ пулнӑ пек ӑнланчӗ вӑл. Урӑх нимӗн те пӗлеймерӗ, автобусран тухма тиврӗ. «Манӑн та паян ӑнсӑртран командировкӑна юхрӗ» – шутларӗ вӑл ирӗксӗрех ӗҫе ҫывхарнӑ май.

...Володьӑпа Юра ӗнер калаҫса татӑлнӑ вырӑнта тӗл пулчӗҫ. Вӗсем паян иккӗш те – канура. Пӗрер курка сӑра ӗҫрӗҫ, пирус туртрӗҫ. Вӑхӑта иртерес тесе кинотеатра пӗрремӗш сеанса кайрӗҫ. Кӑнтӑрла иртсен уйрӑлчӗҫ. Володя киле кайрӗ. Юра хӑй ӗҫӗпе таҫта чупрӗ.

Киле ҫитсен пытанмалли вырӑн шыраса хӑшкӑлчӗ Володя. Кравать айне чунӗ туртмарӗ, вӑл вырӑн анекдотсем валли ҫеҫ тесе шутларӗ. Шторасем хыҫне тӑма та ҫук: вӗсем кӗскерех, урайне ҫитмеҫҫӗ, Зина чӳречене хуплас тейӗ тата – упӑшки умӗнче те хывӑнма именет те... Шкапа кӗрсе ларма та май килмест – туллиех вӑл. Ҫук пытанмалли вырӑн! Кравать айнех суйласа илме тиврӗ апӑршан. Тавлашӑва пӑрахӑҫлас тесе шутларӗ вӑл, анчах ӗнер ӑнсӑртран ҫуралнӑ кӗвӗҫӳ туйӑмӗ ҫӗнтерчӗ-ҫӗнтерчех. Тата мӗн пулса тухассине пӗлес кӑсӑклӑх та канӑҫ памарӗ.

Ӗҫрен таврӑнсан Зинӑн чунӗ кӑрт турӗ. Хват-терте нумаях пулмасть пирус туртнӑ шӑршӑ кӗчӗ, диван ҫинчи пӗчӗк минтер те хӑй вырӑнӗнче мар пек... «Мӗне пӗлтерет

ку? Юрě, куç курě унта...» Çула май илнě çăкăра сумкинчен кăларса хумасăрах Зина каçхи апат хатěрлеме тытăнчě. Çав вăхăтра шăнкăрав сасси илтěнчě. Алăка уçрě те упăшкин сменăри юлташě Юра тăнине курчě. «Ку тата мěн туса çÿрет? Володьăпа кайман-и вара? А-а, ку ирпе автобусра илтнě «ман юхха» пулě-ха?» – пырса кěчě шухăш Зина пуçне. Вара хăнана кěме сěнчě.

– Эс мěн, Володьăпа пěрле командировкăна кайман-им? – ыйтрě вăл унран.

– А вăл мěн, килте мар-и? Ěнер мана паянхи ěç хыççăн кěме ыйтнăччě те вăл... ак, кěрсе тухасах терěм.

– Ну, ирт эппин, кěтěн пулсан, – терě те Зина кухньăна утрě. Юра унран юлмарě, пěчěк сěтел çине çур литр йăпăр-япăр кăларса лартрě.

– Ку тата мěн тума кирлě? Çук, çук, чик каялла, – килěшмен пек пулчě Зина.

– Пěр илсе килнě япалана каялла илсе кайма юрамасть теççě те чăвашсем...

– Ман çыртмалли-тумалли те килте çук сан валли. Кěçěр пěчченех тесе, акă, хама валли çеç апат хатěрлетěп.

– Пире темех кирлě мар, сухăнпа çăкăр татăкки те çитет.

– Мěнле пире? Татах такам килес çук пулě те?

– Килес-тăвас текенě çук-ха вăл, эп пěчченех, йăлана кěнипе çеç тухса кайрě сăмаххи.

– Ах, тата, çăкăр тенěрен, пирěн пěр чěлě те çук паян, ирпе Володьăна парса ятăм юлашкине. Эс лар-ха кăштах, эп чупса кайса килем. Ав, диван çумěнчи пěчěк сěтел çинче «За рулем» пур, пăхкаласа лар çавна.

Зина çăкăрлă сумкине илчě те васкасах тухса кайрě. Юра, Зина хыççăн алăк хупсанах кухньăран тухса, Володьăна чěнчě. Лешěн сасси кравать айěнчен илтěнчě, кěçех пуçě те курăнчě, сăн-пичě çилěллě.

– Ман арăм та чăнах пурин пекех-ши? Апла пул-сан пĕр кун та пурăнмастăп унпа, – терĕ вăл хăрăлти сасăпа.

– Хĕрарăм вăл самантлăха тула тухсан та арçын тупать теççĕ, – хушса хучĕ Юра пурнăç кăткăслăхне йăлт пĕлнĕн.

Володьăн кăмăлĕ пушшех пăсăлчĕ.

– Тен, тухас, Юра? Тен, урăх кирлĕ мар выляма? – иккĕленчĕ Володя. Чĕмерене кайтăр ещĕк эрехĕ, ахалех илсе ĕçтерĕп-çке...

– Çук уш, Володя, вăййа чеснă вылясах пĕтерер. Вырт кĕрсе, Зина çитет те пуль ĕнтĕ.

Юра кухньăна кайса ларма ĕлкĕрчĕ çеç, Зина çитрĕ те.

– Ак, çăкăр илтĕм, кăштах çыртмалли те туянтăм. Эс кĕленчӳне хăвăртрах ĕç те уттар килелле, атту каç пулса килет ав. Такам курсан тем калĕ тата.

– Юрĕ-çке, ăçта васкас. Паян юлса таврăнатăп тесе асăрхаттарнă эп килте.

Вăл кĕленчине уçрĕ, Зина лартса панă черкке çумне тепре лартма ыйтрĕ.

– Пĕлетĕн вĕт эп ĕçменнине, Юра. Ну, юрĕ эппин, ятне тăвам çынсем пек, – тепĕр черкке, малтанхинчен пĕчĕкреххине, кăларса лартрĕ хĕрарăм.

Хăна черккесене тултарчĕ, сывлăха пултăр тесе, хăйĕн черккине ӳпĕнтерчĕ. Зина сыпнă ятне турĕ.

– Çук, çук, Зина, мана хисеплесе те пулин тĕппипех пушат пĕрремĕш черккене.

Юриех хирĕçлем пекки тунă хыççăн Зина та ĕçсе ячĕ, апатне лайăххрах çиме тăрăшрĕ, çăкăр çине çу сĕрчĕ. Ерипен кĕленче пушанчĕ, хăй пĕрре ĕçнĕ çĕре Юрăна икшер черкке сыптарчĕ кил хуçи. Хăйне хĕрсе пыракан хăна майлах тыткаларĕ Зина, Юра каласа паракан анекдотсене ихик-ихик тесех итлерĕ. Юлашкинчен Юра ăна ыталама пуçласан та, аллисене унăнне сӳреккĕн çеç сирчĕ, çапах та чуп тума ирĕк памарĕ, питрен çеç сĕртĕнтерттерчĕ. Унтан вăл Юрăна пӳлĕме иртме хушрĕ, лешĕ унта кĕрсе

çухалсанах чӳрече патне пырса такама аллипе сулса тем пĕлтерчĕ, вара тултан кĕмелли алăк патне кайса çăрине пĕр сасăсăр уçса хăварчĕ. Çавăн хыççăн тин, Юра патне пулĕме кĕрсе, юлхавлăн хывăна пуçларĕ. Çакна курса хавхаланнă Юра, кĕпи-йĕмне йăпăр-япăр хывса персе, Зина патнелле ыткăнчĕ.

– Зина, пар, хам хывам аялти кĕпӳне?

– Э-э, çук, эс малтан пĕтĕмпех хывăн, вара интереслĕрах пулĕ.

Юра труççĕкне те хăвăрт хывса печĕ. Çав вăхăтра алăк ерипен уçăлса хупăннă сасă илтĕнчĕ. Ăна тимлĕн итлесе тăнă Зинăпа кравать айĕнче чăтăмсăррăн кĕтсе выртакан Володя çеç туйрĕç. Çак саманта паçăрах чăтăмсăррăн кĕтнĕ Зина хыттăн чĕнчĕ:

– Ну, çитĕ сана унта выртса, Володя, тух кунта, кур хăвăн куçупа аскăнчăк арăмна! Ира, кĕр часрах, кур çара-пакка упăшкуна!

Кравать айĕнчен Володя йăраланса тухрĕ, çийĕ-пуçĕ çара тусан. Коридортан Юра мăшăрĕ Ира чупса кĕчĕ. Вĕсем шак хытса тăнă çара-пакка Юра çине тинкерчĕç. Лешĕ кирлĕ вырăна икĕ аллипе хупланă та ниçта кайса кĕме пĕлми тăрать.

– А-а, эсĕ-и-ха ку! – сиксе ӳкрĕ ун çине Ира. – Ак сана, ак сана! – çутăлтарчĕ вăл ăна питрен те куçран. – Ы-ых, тĕнче хăлти!

Володя, мĕн пулса иртнине хăвăрт тавçăрса илнĕскер, варне тытсах ахăлтатма тытăнчĕ...

Николай Жирнов

# ЧĔРĔ ТАВĂР



Калав

Мускаври строительство материалĕсен пасарĕ хĕрсех суту-илӳ тăвать. Кунта йунĕ хакпах темĕн тĕрлĕ материал та туянма пулать. Суйла мĕн кирлине, укҫа кăна кĕсьере чăштăртаттăр.

Миша кунсеренех ҫак пасарта ҫӳрет. Чылайăшне паллать вăл кунта, ăна та нумайăшĕ пĕлет. Атăл тăрăхĕнчен килнĕскер, Мускавра пĕр хваттерте хуҫисене уйăхсерен укҫа тӳлесе пурăнать. Пасарта тупăннă юлташĕсемпе сутуҫăсем ĕҫ тупма пулăшаҫҫĕ ăна, уншăн вăл вĕсене ĕҫ хакĕнчен вунă процент тӳлет, ҫавăнпа нихăҫан та ĕҫсĕр лармасть.

Материал илме пыракан ҫынсенчен сутуҫăсем тӳрех ыйтаҫҫĕ:

– Сире, тен, специалисчĕ те кирлĕ? – теҫҫĕ.

– Кирлĕ, кирлĕ! – хуравлаҫҫĕ лешсем вĕсене.

Вара сутуҫăсем ҫийĕнчех Мишăна пĕлтереҫҫĕ. Вăл кĕттерсе тăмасть, «кирлĕ» ҫын патне вĕҫтерсе те ҫитет. Кампа та пулин калаҫса татăлсан, темиҫе пасарта курăнмасть – ырми-канми ĕҫлет.

Пĕр чипер кун Мишăна тахăшĕ чĕнчĕ:

– Миша, – терĕ вăл, – сана унта заказчица кĕтет...

– Халех пыратăп! – килĕшрĕ йĕкĕт.

Ăна чĕнме килнĕ çын хыççăн вăл ретсем умĕпе анаталла васкарĕ. Картлашка патĕнчи кĕтесре пĕр чипер хĕрарăм кĕтсе тăрать иккен.

– Мĕнле нуша хăваласа килнĕ сире ку пасара? – ыйтрĕ Миша пăхма кăмăллă хĕрарăмран.

– Хваттер ваннăйĕнче кивĕ плиткăсенене хăйпăтмалла та çĕннисене çыпăçтармалла, – пĕлтерчĕ çавскер.

– Миçе квадратне пĕлетĕр-и?

– Пĕр вун пилĕк квадрат пулать пуль...

– Эппин, виçĕ татăк тӳлеме тивет.

– Йӳнех мар-çке... Шутласа пăхам-ха.

Чиперкке кăшт аяккарах пăрăнса тăчĕ те шухăша кайнăн Миша çине чылай пăхса тăчĕ. Ăна хăй ăшĕнче хак парать тейĕн. Пĕр вунă минутран хĕрарăм каялла таврăнчĕ.

– Çамрăк çыннăм, – терĕ вăл иментнĕн пуçне пĕксе, – манăн пĕр чăрмав сиксе тухрĕ-ха...

– Пуçларăр-тăк, каласах пĕтерĕр ĕнтĕ?

– Укçи манăн икĕ татăк çурă кăна...

– Вара мĕн?

– Çитмен укçашăн чĕрĕ таварпа тӳлеме май çук-ши тетĕп.

– Мĕнле чĕрĕ тавар тата вăл?

– Эх, çамрăк çыннăм, çавна та чухламастăн-и? Ну, натурăпа эппин...

– Э-э, чиперккем, эп ун йышши авантюрăпа çыхланмастăп.

Илемлĕ хĕрарăм сăн-пичĕ самантрах улшăнчĕ: тин çеç хĕвел пек ялкăшса çунаканскер, хăвăрт тĕксĕмленчĕ. Çакна çийĕнчех туйса илсе, хăй ытлашширех каланине ăнланчĕ Миша, çавăнпа хĕрарăма лăплантарма пикенчĕ:

– Тăхтăр-ха, – терĕ вăл çепĕçреххĕн, – ытлашши темĕн ан шутлăр. Эп сире пĕртте кӳрентерес теменччĕ. Каçарăр та, эсир ман чун туртăмĕ мар, çавă çеç. Пĕр пилĕк минут тăхтăр-ха, эп тепĕр юлташа чĕнсе килем.

Хĕрарăм куç хупса иличчен Миша суту-илӳ речĕсем хушшинче çухалчĕ. Вăл хăйĕн Лёша ятлă юлташне хăвăрт шыраса тупрĕ, ăна ĕç-пуç пирки васкавлăн каласа пачĕ.

– Акă, паллашăр, ку манăн юлташ Алексей, – терĕ Миша чăтăмлăн кĕтсе таракан чиперккене.

Лешĕ паçăрхи пекех кăшт аяккалла кайса тăчĕ те Лёшăна уринчен пуçласа пуç тӳпине çити тимлĕн сăнаса пăхрĕ, унтан йĕкĕтсем патне таврăнчĕ.

– Ку каччă ман кăмăла каять, – терĕ вăл хавассăн. – Мана Марина тесе чĕнеççĕ.

– Вăт, аван, – Мишăна хул пуççинчен ал лаппипе çапса илчĕ Лёша. – Пока, пасарта тепре тĕл пуличчен!

Лёшăпа Маша пулас ĕçĕн калăпăшне тишкерме кайрĕç. Трамвайпа икĕ чарăну кайса, метрон Павелецкий вокзалĕ патне çитрĕç. Унтан тухсан, кивĕ çуртăн тăваттăмĕш хутне хăпарчĕç.

– Акă ваннăй, акă плиткăсем, ĕçлеме пултаратăр, – йăл кулчĕ хĕрарăм.

– Малтан ваннăйне тĕрĕслем-ха, мĕн-мĕн тума тивет унта, – ĕçлĕн шаккакаласа, виçкелесе пăхрĕ Лёша ваннăй стенисене. – Марина, сирĕн стенасем пилĕк сантиметр чухлĕ чалăш? – пĕлтерчĕ юлашкинчен вăл.

– Мĕн тумалла-ши вĕсене тӳрлетме, Лёшенька?

– Штукатурка тумалла.

– Нумай кирлĕ-и растворĕ?

– Çук, нумаях мар, çапах та кирлĕ пулать. Мĕн-мĕн пур сирĕн ĕçе пуçăнма?

– Акă, плиткăсем пур, урăх нимĕн те туянман.

– Э-э, тăванăм, ун пек каймасть. Цемент, алебастр, ПВА çилĕм тата ытти япаласем кирлĕ.

– Эп ăçтан пĕлем мĕн-мĕн кирлине?

– Эппин, айтăр хăвăртрах каялла Каширкăна, каç пуличчен ĕлкĕрмелле. Мĕн кирлине хамах суйлăп, эсир хакне çеç тӳлесе тăрăр.

Вĕсем машинăна ларса пасара вĕçтерчĕç. Кирлĕ материалсене хăвăртах тупрĕç, хаклашма та ытлашшиех тивмерĕ, мĕншĕн тесен Лёша хăй çӳрерĕ ретсем тăрăх. Ăна кунта Мишăна пĕлнĕ пекех пĕлеççĕ. Кĕçех материалсене çурт умне турттарса çитерчĕç. Лёша вĕсене пĕчченех йăта-йăта хăпартрĕ. Марина йăл-йăл кулкаласа алăка уçса-хупса çеç тăчĕ.

Япаласене кĕртсе пĕтерсен, Лёша ĕç хатĕрĕсем патне вĕçтерчĕ. Вăл таврăннă тĕле каç та пулса кайрĕ. Ăна пăхмасăрах йĕкĕт ĕç тумтирне тăхăнасшăнччĕ, анчах ăна Марина тытса чарчĕ.

– Алексей, – терĕ вăл, – вăхăт чылая кайрĕ ĕнтĕ, паян ĕçе пуçăнмасан та юрĕ. Паçăр эсир витĕрех тарланăччĕ, кăшт та пулин çăвăнса тухăр, ал шăлли унта ваннăйĕнчех. Эпĕ апат хатĕрлем...

Нумай та вăхăт иртмерĕ, Лёша çăвăнса та тухрĕ. Çăмăл шăм-шакпа кăмăлласах апата ларчĕ. Вăл хăналаннă вăхăтра Марина кухньăран тухса çухалчĕ. Çинĕ хыççăн Лёша кухня алăкĕнче чарăнса тăчĕ, унталла-кунталла пăхрĕ, çывăрмалли пӳлĕмри çутăсăр пуçне урăх ниçта та çутă курăнмарĕ. Çав пӳлĕм алăкне уçса пăхрĕ вăл. Сарлака вырăн çинче Марина кĕнеке вуласа выртать иккен. Йĕкĕт алăка каялла хупрĕ, унтан зала кайса пăхрĕ, унта ăна валли вырăн хатĕрленине курмарĕ вăл, вара Марина пӳлĕмне таврăнчĕ. Лешĕ ним пулман пекех кĕнеке вуласа выртать.

– Кхм, кхм, кхм, – ӳсĕрчĕ Лёша, хăй кунта пуррине пĕлтерес шухăшпа. Марина кĕнекерен пуçне илсе качча еннелле пăхрĕ.

– А, Лёша... Мĕн пĕр вырăнта хытса тăратăн? Кил, вырт, эпир калаçса татăлнăччĕ вĕт...

Качча нумай кĕттермерĕ, хăвăрт хывăнчĕ те вăшт! кăна вырăн ăшне чăмрĕ. Ытла та хĕрӳ иртрĕ вара çав каç...

Ирпе тĕлĕнмелле çăмăллăн тăчĕ Лёша вырăн çинчен, ыйхăсăр каç пулман та тейĕн. Апатланнă хыççăн пĕр

тăхтамасăр ĕçе пуçăнчĕ вăл. Ĕçĕ нихçанхинчен те ăнăçуллăрах пулса пычĕ. Анчах сасартăк пуçне ăмсануллă шухăш пырса кĕчĕ: «Кун пек тăрăшсан виçĕ кунтах вĕçленме пултарать-çке ĕç-пуç? Тен, юриех тăсмалла ăна? Паха вĕт-ха Марина ытамĕнче выртма! Ырлăха тăснишĕн çылăх пулас çук...»

Тепĕр вунă кунран Миша Лĕшăна пасарта тĕл пулчĕ. Лешĕ ăмăр çанталăкран та ăмăр. Çавăнпа пуль юлташне асăрхамасăрах иртсе кайрĕ вăл. Миша ăна хăваласа çитсе хул пуççийĕнчен аллипе çапса илчĕ.

Лёша вăрт! çаврăнса тăчĕ.

– А-а, Миша... сывлăх сунатăп, – тин çеç ыйхăран вăраннă пек мăкăртатрĕ вăл.

– Мĕн пулнă сана, Лёша? Кун пек пусăрăнчăк кăмăллă йĕкĕт марччĕ-çке эсĕ?

– Да, Миша, эс тĕрĕсех çыхланман çав хĕрарăмпа, – терĕ Лёша, йывăррăн хаш! сывласа. – Ан пăшăрхан, вунă процентне эпĕ сана кăшт каярах парăп...

– Вăл юрĕ-ха, ниçта та тармĕ. Çапах та мĕн пулса иртнĕ сан унта?

– Марина мана лартмаллипех лартрĕ, пĕтĕм купчашкипех.

– Каласа пар-ха йĕркипе?

– Каласа парасса парăп та, эс мана сăмах пар мĕн илтнине никама та пĕлтерместĕп тесе, уйрăмах çак пасарта.

– Сăмах паратăп, ан шиклен.

– Итле эппин. Эп хамах айăплă, хамах ухмах. Чиперккепе ытларах пулас тесе, ĕçе юриех тăсрăм, унсăрăн виçĕ кун хушшинчех вĕçлемеллеччĕ. Эпĕ вара, ăса çухатнăскер, вунă куна тăсрăм, ĕçе ĕнер кăна вĕçлерĕм.

– Мĕн пулса иртрĕ вара? – чăтăмсăррăн ыйтрĕ Миша.

– Ĕç хатĕрĕсене пуçтарса сумкăна чикрĕм те тăратăп кĕтсе ĕçшĕн тӳлессе.

– Лёша, мĕн кирлĕ сана тата? – ыйтрĕ Марина пӳлĕмрен тухса.

– Ара, куратăр вĕт, ĕç вĕçленчĕ. Расчет тумалла пуль?

– Эс мĕн, кăвакарчăнăм, ухмаха перетĕн-им? Сана вунă кун çитернӗ, ĕçтернӗ, ăшă вырăнпа тивĕçтернӗ. Мĕн кирлĕ тата?

– Эпир урăхла калаçса татăлнăччĕ-çке?

– Татăлнă, татăлнă... А эс пĕлетĕн-и мĕн чухлĕ тăрать натура пĕр каçра?

– Çу-ук...

– Апла пулсан, кай та пĕл Тверская текен урама, вара чухлăн, парăмлă-и эпĕ е çук-и.

Çакăн хыççăн Лёша тепĕр хут йывăррăн хаш! сывларĕ те сигарет чĕртсе ячĕ.

– Марина мана вăйпа тенĕ пекех тĕртсе кăларчĕ. Апăкне шалт! çеç хупрĕ.

Миша чăтаймарĕ, ахăлтатсах кулса ячĕ.

– Вăт, вăт, эсĕ те кулатăн акă, ыттисем мăшкăлламах пуçлĕç, пӳрнепе тĕллесех кăтартĕç хыçран.

– Ай да, Лёша, култаратăн та çав! Лăплан, нимĕнле вунă процент та кирлĕ мар мана санран, парах шутлама ун çинчен. Ан хăра, никама та каласа памăп...

Лёша лăпланчĕ пулас, лăпкăн аяккалпа пăрăнса утрĕ.

# Хитре хӗр



Май уявӗ умӗнхи пасар... Халӑх хӗвӗшет. Ҫынсем ытларах чечек речӗсем умӗпе иртеҫҫӗ. уяв ячӗпе кашни илемлӗ чечек ҫыххи туянасшӑи. Акӑ, ҫывӑхрах пӗр хитре хӗр куранчӗ. Хӑй кӗске юбка, хура капрон чӑлха, тӑпӑлтӑпӑл атӑ тӑхӑннӑ. Ҫав тери килӗшӳллӗскер! Арҫынсем пурте тенӗ пекех куҫ илми тинкерчӗҫ ун ҫине – халь тесен халь ҫӑтса ярӗччӗҫ шереметсем. Тем пама хатӗр вӗсем унпа ҫывӑхланассишӗн.

Акӑ, иккӗмӗш хут иртрӗ хӗр вӗчисене илӗртӳллӗн вылятса. Висҫӗмӗш хутӗнче юнашар вырнаҫнӑ ҫи-пуҫ сутуҫисен ретӗнче чарӑнса тӑчӗ, хӗрарӑм тумтирӗсене тыта-тыта пӑхрӗ. Унччен те пулмарӗ, ун патне чечек сутакан арҫынсенчен пӗри пырса тӑчӗ.

– Итле-ха, пикеҫӗм, ман санпа калаҫмалли пур... – йӑл кулчӗ вӑл.

– Мӗн ҫитмест сана, мужик? – куҫне ҫиҫтерчӗ хӗр те.

– Ытла та килӗшетӗн эс мана, санпа ҫывӑх-рах паллашас тетӗп.

– Кирлех-ши?

– Кирлӗ, кирлӗ! Эп парӑмра юлмӑп...

– Пур хӗр те укҫалла сутӑнать тетӗн-и?

– Эппин. мӗн тумалла сана юрас тесен?

– Пӗлместӗп ӗнтӗ, ним калама та пултараймастӑп.

– Коньяк, шампански, шӑккӑлат илсен мӗпле пек, э?

– Интереслӗ пек... паллах, чӑнласах пулсан.

– Чӑнласах, чӑнласах, пикеҫӗм! Эс кӑштах кӗтсе тар, эп момент йӗркелеп ӗҫ-пуҫа.

Арçын васкавлăн лавккасем еннелле вĕçтерчĕ. Хĕр нимĕн пулман пекех тумтир суйланçи турĕ, хакĕсене ыйта-ыйта пĕлчĕ, алла илсе пахалăхĕсене тĕрĕслерĕ.

Вунă минут иртрĕ-и, арçын пашкаса та çитрĕ. икĕ аллинче – пĕрер пакет. Хĕр, курмăш пулса, рет çумĕпе утса кайрĕ, урама тухмалли алăк еннелле çул тытрĕ. Кĕçех арçын унпа танлашрĕ.

– Эп хатĕр, пикеçĕм...

– Куратăп. суккăр мар.

– Ăçта кайăпăр?

– Инçех мар пĕр улах вырăн пур. Тен, çавăнта?

– Вăт, аван! Калаçса таталтăмăр тейĕпĕр.

– Таталасси пулĕ-ха, ан васка.

– Юрĕ, юрĕ, пикеçĕм.

Троллейбуса ларса вĕсем вокзала çитрĕç, унтан 10-мĕш автобуса куçса ларчĕç те Лапсар еннелле вĕçтерчĕç. Вăрман тĕлĕнчи чарăну патне çитсен анса юлчĕç. Йывăçсем айĕнче курăк шăтса тухма та ĕлкĕрнĕ-мĕн, çулçăсем те самай сарăлнă.

– Ой, сивĕ-çке сулхăнра!

Арçын, сăран курткине хывса, ăна хĕрĕн хул пуççийĕнчен уртса ячĕ. Кĕçех вĕсем пĕчĕк те хăтлă уçланкăна пырса тухрĕç. Хĕр пĕр тунката умĕнче чарăнса тăчĕ.

– Ак пире мĕн кирли...

– Ай. улах та кунта!

– Çавна шырарăмăр та ĕнтĕ эпир.

– Çапла. çапла. пикеçĕм.

Салфеткăсем сарса хурса арçын васкавлăн сĕтел йĕркелерĕ, кăлпасси, сыр касса хучĕ, хаклă канфет курункине уçрĕ, коньяк кĕленчи кăларчĕ, ăна уçса, янкăр шĕвеке «пласмасс» куркасене ячĕ.

– Ну, пикеçĕм, ĕçер-ха паллашнă ятпа, сана тĕл пулнишен питĕ кăмăллă эпĕ.

И-44182



Национальная ... Чув... Республ...

Вĕсем куркасене пĕр-пĕринпе перĕнтерсе илчĕс. Арçын тĕппнпех ĕçсе ячĕ, хĕр вара çуррине тенĕ пек çеç сыпрĕ.

– А, эп мансах кайнă, – терĕ те арçын пакетран шампански кĕленчи туртса кăларчĕ, çавна май хĕре ыталама пикенчĕ.

– Тăхта-ха, эпир куна та тутанма, лешĕнпе те киленме ĕлкĕрĕпĕр, – чарчĕ хĕр. – Эп унччен йывăç хыçне çăмăл ĕçпе кайса килем-ха.

Хĕр тăче те труççĕкне хывса арçын умне пăрахрĕ, вара тĕмсем хыçнелле васкавлăн чăмрĕ. Чăлтăр шурă труççĕке курсан, арçынăн куçĕсем алчăраса кайрĕç. чавси çине таяннăскер, ялт! тӳрленсе ларчĕ, тĕмсем хыçнелле чăтăмсăррăн тинкерчĕ.

Хĕр таврăнсан мĕн пуласси пирки ыррăн шухăшланă май арçын тулли кăмăлпа тепĕр курка хаплаттарчĕ, пĕрре труççĕк çине, тепре тĕмсем хыçнелле пăха-пăха илчĕ.

Пике кайнăранпа вунă минут та иртрĕ ĕнтĕ. Арçын аллинчи сехечĕ çине пăхрĕ. Вуннă мар, вун пилĕк минут... Вăл ирĕксĕрех тăчĕ, унталла-кунталла утма тытăнчĕ. Чунĕ ырă мара систерчĕ те, арçын хĕр кайнă еннелле вирхĕнчĕ. Кĕçех Канаш çулĕ çнне чупса тухрĕ. Кунта машинасем кăна хĕвĕшсççĕ. Хĕр нихăш енче те курăнмарĕ. Çапах шанăça пĕтĕмпех çухатмарĕ-ха вăл – уçланкăна таврăнчĕ. Анчах хĕр кунта та çук иккен. Ăна улталаса хăварнине арçын тинех чухларĕ, вара кĕленчене çиллессĕн ярса илчĕ те анинчен ланкăртаттарса ĕçрĕ, унтан ăна тунката çинелле вăркăнтарчĕ. Кĕленче чăл-пар çеç саланче, хĕрлĕ-хăмăр шĕвек çĕрелле юхса анчĕ...

Шампански кĕленчине ватмарĕ, ăна юнашар выртакан чăлт шурă труççĕкпе чăмăртаса тытса хула еннелле васкавлăн вĕçтерчĕ. Кĕçех вăл милицин дежурнăй уйрăмне пырса кĕчĕ. Кунта. дежурнăйсăр пусне, тепĕр милиционер та, шырав йытти те пур-мĕн. Арçын ыйтса та тăмарĕ,

аллине пĕчĕк чӳречерен чикрĕ те: «Ме, шăршла, анчăк, шăршла!» – теме тытăнчĕ.

Йытăпа юнашар ларакан милиционер сасартăках кăмăлсăрланчĕ.

– Ыйт-ха çав аташакан этемрен, мĕн кирлĕ ăна? – терĕ вăл дежурнăй милиционера.

– Эп аташмастăп-ха, йĕркеллĕ çынах. Çав анчăк çакна шăршлатăр та йĕр илтĕр тетĕп. Атя, шăршла, анчăк, шăршла...

Милициоиерсем ниепле те ăнкараймарĕç-ха: мĕн кирлĕ ку этеме? Юлашкинчен ыйтса пĕлчĕç-пĕлчĕçех. Иккен, унăн сăран курткин кĕсйинче çитмĕл пилĕк пин тенкĕ укçа пулнă! Вăл укçапа темиçе «Жигули» илме пулать-çке.

– Ай, хĕр те вара!... – тĕлĕнчĕç милиционерсем.

Çавăнтах фоторобот туса хатĕрлерĕç хайхисем, унтан ăна республикăри районсем тăрăх салатрĕç. Вăхăт самай иртрĕ унтанпа, анчах пуç çавăрмăша тупасси пулмарĕ – шыва путнă пекех çухалчĕ. Хитре хĕр пысăк хака ларчĕ.




Кавказ çыннисем виççĕн Мускава çитрĕç. Вĕсен сарлака карттусĕсем çине çынсем тĕлĕнсе пăхаççĕ. Хăйсен чĕлхипе тем калаçса, вĕсем таксисем тăракан вырăна утрĕç. Такси нумай кĕттермерĕ, пырса та тăчĕ.

– Сире ăçта илсе каймалла?

– Пире, хаклă çыннăм, машинсем сутнă тĕле илсе çитер.

– Хăш магазинне-ши?

– Туссем каласа янă тарах, Автозаводская метро еннелле. Таксистсем пĕлме кирлĕ терĕç.

– Тĕрĕс калană, вырнаçăр меллĕрех.

Хăнасем сасартăк хăйсен чĕлхипе калаçма, шавлама тытăнчĕç. Ăнланма çук: те ятлаçаççĕ, те тăванла калаçаççĕ. Таксист вĕсене итлесе йăлăхрĕ те приемникне ячĕ.

– Эс, хаклă çыннăм, пире ан ятла, пирĕн хамăрăн калаçу.

– Эп сире итлеместĕп те, пурпĕр ăнланмастăп.

– Хаклă çыннăм, эс пысăк ункăсем туса ан çӳре, тӳрремĕн илсе çитер.

– Çиччас Пролетарское текен метро станцинчен иртетпĕр те инçе юлмасть.

– Лайăх сăмăхсем калатăн, хăв пĕлнĕ пек ту эппин.

Нумаях та каймарĕç, çитрĕç те.

– Ак сана счетчик кăтартнă виçĕ тенкĕ, ку вунă тенки хăвăрт çитернĕшĕн пултăр.

– Тав сире ырӑ кӑмӑлшӑн.

Таксист укҫасене кӗсьене чикнӗ тӗле икӗ пассажир чупса та ҫитрӗҫ. Виҫӗ ентеш тӑрса юлчӗ. Машина речӗсене курса, куҫӗсем чарӑлсах кайрӗҫ. Хӗрринчен пуҫласа пӗтӗм ретсене пӑхса тухма шутларӗҫ. Кунӗпе ҫӳресе те пӗр ҫӗнӗ «Волга» тӗл пулмарӗҫ. Ывӑнсах ҫитрӗҫ, вара гостиницӑна кайма шутларӗҫ. Рынокран тухнӑ ҫӗрте икшер беляш илчӗҫ, хырӑм выҫнӑ пулин те, аппетитсӑр ҫӑмларӑҫ. Ҫав вӑхӑтра вӗсем патне пӗр интеллигентлӑ ҫын пычӗ. Хӑйне ирӗклӗ те хӑюллӑ тытать.

– Сире мӗн кирлӗччӗ?

Кавказ ҫыннисем ун ҫине шанмасӑр пӑхрӗҫ.

– Ут хӑвӑн ҫулупа, хаклӑ ҫыннӑм, шӳтлеме вӑхӑт ҫук пирӗн.

– Эп ӑнласах ыйтатӑп.

– Ҫӗнӗ «Волга» шыратпӑр.

– Кун пек эсир уйӑх хушши шырасан та тупаяс ҫук.

– Мӗншӗн ун пек калатӑн?

– Ыйтас пулать, шӑппӑн ҫӳренипе ӗҫ тӑваймӑр, тата хӑйӗн хакӗпе машина тупаймӑр.

Арҫын, хӑйне йӗрлемеҫҫӗ-ши тенӗн, унталла-кунталла пӑхса илчӗ.

– Ҫирӗм пиллӗкпе килӗшетӗр-и?

Хӑнасем пӗр-пӗринпе шавлӑн калаҫма пуҫларӗҫ. Арҫын вӗсене васкатмарӗ, лӑпкӑн хаклӑ сигарет туртса тӑчӗ. Унтан чӑтаймарӗ пулмалла.

– Эй, эсир хӑҫан калаҫса татӑлатӑр? Ман каймалла...

Виҫҫӗшӗ те пӗр хӑрӑс шӑпланчӗҫ. Асли йывӑррӑн аллине сулчӗ.

– Халь тесен халь илме хатӗр.

– Машине кунта мар-ха, ыран вунӑ сехет тӗлне килӗр.

– Юрать, – хуравларӗҫ туссем.

– Тепӗр ыйту татса памалла, тӑрӑшнӑшӑн манӑн кӳренмелле ан пултӑр.

– Миçе ыйтан?

– Пилĕкçĕр.

– Эс мĕн, хаклă çыннăм, заводра икĕ уйăх тăрăшмапла вĕт уншăн?

– Эсир хăвăр та производствăра ĕçлесе илмен пульха...

– Эс çу каçа садра тăрмаш, санăн та нухрат пулĕ.

– Ман сирĕнпе тавлашма вăхăт çук, эп уттарам-ха.

– Тăхта, ан васка. Калаçса татăлнă тейĕпĕр. Вĕсем килĕшсе алă тытрĕç.

– Сана ăçта кĕтмелле?

– Килĕр çакăнта, сире хамах тупăп.

Арçын тăхтаса тăмасăр уйрăлса утрĕ. Кавказ çыннисем çывăхри гостиницăна кĕчĕç. Анчах унта пушă пӳлĕм çукмĕн. Такси тытса урăх гостиницăна вĕçтерчĕç.

Унта çитсен, ывăннăскерсем, вестибюльти креслăсем çине вырнаçрĕç. Чи çамрăкки паспортсем пуçтарчĕ, пĕрин ăшне çирĕм пилĕк тенкĕ хучĕ.

– Халь çеç пĕр пӳлĕм пушанчĕ. Виççĕре пырать-и?

– Пырать, пырать.

Вырнаçнă хыççăн кăштах канса илчĕç, унтан ресторана анчĕç те мĕн хупиччченех ларчĕç, пĕр вĕçĕм савăнăçлă музыка яма ыйтрĕç, тăраниччен ĕçрĕç, çирĕç. Ирпе иккĕш вырăн çинчен чиперех тăчĕç, пĕри вара чирлесе ӳкнипе тăраймарĕ.

– Эрех япăх пулчĕ-ши? Коньяк çеç ĕçмелле пулнă-мĕн.

– Эрехне те тутанса пăхас килчĕ-çке.

– Халь, ак, ыр кур...

Çын çав-çавах тăраймарĕ. Пулăшу машинне чĕнме тиврĕ. Ăна укол турĕç те пульницăна илсе кайрĕç. Иккĕшĕ хыçран таксипе пычĕç. Коридорта тухтăра тытса чарчĕç.

– Тархасшăн ан хурăр ăна, парăр мĕнле те пулин эмел. Çĕркаç эрех япăх пулчĕ пулмалла.

– Эрехĕ айăплă мар пулĕ, çынĕ ывăннă сирĕн, кăштах канмалла унăн. Кайран хуть те ăçта илсе кайăр. Халь вара сывă пулăр.

– Вах, вах, вах, машинăна кам тытса пырĕ-ши ĕнтĕ?

– Ан кулянăр, Мускавра водитель нумай, укçине ан шеллĕр çеç.

Пульницăран пуля пек вĕççе тухрĕç те таксипе рынока васкарĕç, çавах кăштах кая юлчĕç.

– Эсир мĕн çур сехет кая юлтăр? Аван мар кун пек.

– Инкек-ха пирĕн, водителе пульницăна хума тиврĕ, аласăр тăрса юлтăмăр теме пулать.

– Мĕн проблеми, хамах водительне те тупса парăп.

– Аван, аван, ырă çыннăм.

– Халь пĕр сăмахсăр ман хыçран утăр, ан шавлăр.

Картиш тулашĕнче шурă «Волга» тăрать. Ун умĕнче пĕр арçын чўречине тасатать.

– Акă, тавар – сирĕн умра...

– Тĕсĕ те эпир кăмăлланиех.

Кавказ çыннисем машина тавра темиçе те çаврăнчĕç, пăхрĕç, тĕрĕслерĕç, хăйсем хушшинче тем калаçса илчĕç.

– Аван машина, илетпĕр, – терĕ аслăраххи.

Машина сутма пулăшаканни ку рынокра паллă çын пулмалла, кирлĕ хутсене хăвăрт йĕркелерĕç. Пур енлĕн те татăлсан машина тупма пулăшнă арçын телефон патне утрĕ, чылайран тин таврăнчĕ.

– Пĕр паллана юлташ та паян килте çук.

Мĕн тумалла ĕнтĕ? Кунĕн-çĕрĕн машина умĕнче тăраймăн вĕт. Унччен те пулмарĕ, кăнтăр çыннисем патне хĕрлĕ çўçлĕ пĕр арçын çывхарчĕ.

– Сире водитель кирлĕ тет мар-и?

– Кирлĕ, кирлĕ. Кам пĕлтерчĕ?

– Сăмах кунта çилпе çўрет.

– Тĕлĕнмелле.

– Тĕлĕнмелли ним те çук. Так, кирлĕ-и водитель?

– Кирлĕ пулмасăр. Хăв мар пуль те водителĕ?

– Эпĕ çав, хам пирки калатăп та.

– Права пур-и?

– Акă.

– Вăт, аван.

Пĕрремĕш çынĕ машинăран тухрĕ.

– Эп кунта тек ытлашши. Тэтах кама та пулин «Волга» кирлĕ пулсан шăнкăравлаччăр, ак ман телефон номерĕ.

Арçын хĕвĕшекен халăх хушшинче çухалчĕ. Хĕрлĕ çӳçлĕ этемĕ руль умне кĕрсе ларчĕ.

– Хаклă çыннăм, мĕн чухлĕ ыйтатăн?

– Пин тенкĕ – алла, çул çинчи апат – сирĕнтен, каялла самолетпа таврăнма – билет.

Кăнтăр çыннисем тĕлĕннипе куçĕсене чарса пăрахрĕç, пичĕсенчен савăк кулă çухалчĕ.

– Мĕн хытса лартăр?

– Мĕскер, кунта çынсем урса кайнă-им, кăнтăр кунĕнче çаратаççĕ? Совеç пур-и хуть?

Хĕрлĕ çӳçлĕ водитель ахăлтатса кулса ячĕ.

– Кунта, тĕп хулара, пурнăçĕ çавнашкал, французсем каларĕшле, селяви.

– Ним те тăваймăн, килĕшмех тивет. Ме сана уççи, кайрăмăр.

– Çук, малтан машинине тĕрĕслем-ха, çулĕ ыплата инçе вĕт, тем те сиксе тухма пултарать.

Вăл тухса урапасене тапа-тапа пăхрĕ, капота уçса мотортa тем тĕрĕслерĕ, юлашкинчен кăмăллă юлчĕ пулмалла та, аллисене сăтăркаласа, машинăна кĕрсе ларчĕ.

– Вăт, халь тапрансан та юрать.

– Чутах манман, сан паспорт пур-и, юлташ?

– Пур-çке, кĕсьерех.

– Кӳр-ха кунта, пăхса илем.

Кăнтăр çыннисенчен аслăраххи паспорта илчĕ, уçса пăхрĕ, вуларĕ.

– Сăн ӳкерчĕкĕ хăвăннах, Валера...

Вăл паспорта хăйĕн портфельне уҫса чикрĕ. Унта укҫа чылай пулнине асăрхаса юлчĕ водитель. Хуларан тухсан хăвăртлăха ӳстерчĕ вăл. Машина тикĕссĕн ярăнчĕ. Каҫ тĕлне ҫумăр айне пулчĕҫ вĕсем, ҫул якалса хăрушланчĕ. Вара ҫĕр каҫма ҫул айккине тухма шутларĕҫ. Кавказ ҫынни портфельне аларан вĕҫертмерĕ, ҫĕрле те хăй айне хурса ҫывăрма выртрĕ.

Ирпе ирех ҫула тухма пуҫтарăнчĕҫ, анчах машина кустăрмисем пĕр вырăнта ҫеҫ ҫаврăнса тăчĕҫ. Вăйлă ҫумăра пула ҫул айкки ытлашшиех шӳнĕ курăнать.

– Тĕртме тивет машинăна, – сĕнчĕ водитель.

Кăнтăр ҫыннисем машинăран тухрĕҫ те хыҫалтан тĕртме тытăнчĕҫ. Кустăрмасем айĕнчен пылчăк сирпĕнет кăна. Пĕр вырăнта силленсен машина шоссе ҫине сирпĕнсе тухрĕ-тухрех. Анчах вăл чарăнмарĕ, малалла яра пачĕ. Пылчăкпа вараланнă икĕ ҫын харăссăн кăшкăрса тăрса юлчĕҫ. Кăҫех машина курăн-ми пулчĕ.

– Вах, вах, усал ҫын тĕлне пултăмăр, – вырханчĕ асли.

Вĕсен инкекне, пĕр машина та чарăнасшăн пулмарĕ, ни Мускав енчен килекенсем, ни Мускава каяканĕсем. Тепĕр сехетрен тин пĕр машинăна чарма май килчĕ. Тӳрех милицие кĕчĕҫ вĕсем. Унта ăнлантарса хутсем ҫырса тепĕр сехет иртсе кайрĕ. Мĕн пулса ирнине ГАИ посчĕсене пĕлтерчĕҫ. Тепĕр икĕ кунтан машина Курск облаҫĕнче тупăнчĕ. Анчах утмăл пинлĕ укҫа портфеле курăнмарĕ. Водитель паспорчĕ те унтаччĕ. Вăт, ҫапла. Шыра халь ĕнтĕ ҫиле уй-хирте…

Николай Жирнов

# Çур тенкĕ

Калав

Акă, канмалли кун умĕнхи ĕç смени вĕçленчĕ. Пурин те кăмăлĕсем çĕкленӳллĕ. Станокĕсене тасатса гирпейленĕ хыççăн душа кĕрсе тухрĕç те табель будкин хупă чӳречи умне кĕпĕрленчĕç. Кăшт вăхăтран вăл уçăлчĕ. Рабочисем вара пропуск илсе проходной еннелле васкарĕç. Унтан тухсан проходной умĕнчи чечек йăранĕсем патне пухăнчĕç. Бригада пуçтарăнса çитсен ушкăнпах сăра киоскĕ еннелле çул тытрĕç: ĕç эрни хыççăн чуна кăштах уçмалла-çке. Çав тĕллевпе пуринчен те вăр-вартарах Пашăна лавккана чуптарчĕç, ыттисем çавра сĕтеле сырса илчĕç те анекдотсем çаптара пуçларĕç, пĕри тепринчен кулăшларахххине калама тăрăшрĕ. Черет Фома патне çитрĕ. Ик сăмах та калама ĕлкĕреймерĕ, шавлă ушкăн умне тĕсне çухатнă сăрă тумлă арçын пырса тăчĕ. Фома шăпланчĕ, пурте чĕнмен хăна çине тинкерчĕç.

– Йĕкĕтсем, – терĕ вăл, – сирĕнтен хăшĕ те пулин çур тенкĕ памĕ-ши мана?

– Мĕн йӳтĕмпе пирĕн сана çур тенкĕ памалла-ха? – кулса илчĕ тăсланкă Фома, ун çине çӳлтен аялалла пăхса. – Эс пирĕншĕн тус-и, хăта-и, тăван-и? Ут хăвăн çулупа. Ĕçлесе илес пулать укçана...

Çын хăнк та тумарĕ. Пуçĕнчи береткине пичĕ тăрăх шутараса антарчĕ те: – Тепĕр пилĕк минутран сире кулмаллипех култаратăп пулсан, паратăр-и? – терĕ.

– Айта, хăтпанса пăх эппин.

Этем çиййĕнчех троллейбус еннелле пăрăнса утрĕ. Кĕçех лăк тулли троллейбус çитсе тăчĕ. Хайхи çын, хайне

ĕçлĕ этем пек тытса, ун хыçне пычĕ те троллейбусăн вĕренпе кăкарнă мăйракисене туртса антарчĕ. Вĕрен вĕçне хăй çумĕпе иртсе пыракан пассажира тыттарчĕ...

– Çакна йăпăртлăха тытса тăрăр-ха, – ăнлантарчĕ вăл ăна, – манăн кабинăна çитсе килмелле...

– Çекĕлĕсенчен çаклатăр, – килĕшесшĕн пулмарĕ пассажир.

– Ун пек вăхăт иртет. Ĕçĕ манăн питĕ васкавлă... – хыпăнанçи турĕ этем.

– Ну, юрĕ эппин, – килĕшрĕ пассажир, – эс хăвăртрах тулĕк унта.

Хайхискер вĕрене ярса илчĕ те аялалла туртма пикенчĕ. Лешĕ, йышлă пассажирсемпе хутшăнса, киоск патнелле çул тытрĕ. Унччен те пулмарĕ, троллейбус водителе кабинăран сиксе тухрĕ, вĕрене туртса таракан çын патнелле вирхĕнчĕ.

– Эс мĕн, ăсран тайăлтăн-им?! – кăшкăрчĕ вăл. – Мĕншĕн мăйракасене туртса антартăн?

– Эс хăв кам тата? – ыйтăва ыйтупах тавăрчĕ лешĕ. – Вĕренне мана водитель туртса тăма хушса хăварчĕ. Чăрмантарса ан тăр кунта!

– Эпĕ ку троллейбус водителĕ!

– Ан суй, вĕрене тытса тăма мана урăх çын хушрĕ.

Тарăхнипе водитель хĕрелсех кайре, «сĕмсĕр» çынна çиллессĕн тĕртсе ячĕ. Лешĕ чутах кайса ӳкмерĕ, вĕренрен тытни çеç çăлса хăварчĕ.

– Ах, эс çапла-и?!

Вăл вĕрене вĕçертсе ячĕ те водитель çине сиксе укрĕ, çухавинчен ярса илчĕ. Троллейбус мăйракисем çӳлелле вирхĕнсе çĕкленчĕç.

Çакна курнă çынсем чупса пыман пулсан, мĕн пулĕччĕ-ши малалла? Анчах вĕсене пĕр-пĕринчен туртса уйăрчĕç, çапăçса кайма памарĕç. Çав вăхăтра милиционер та пырса çитрĕ.

Троллейбус салонӗнче халах шавлать, кашниех ăçта та пулин васкать вӗт-ха. Троллейбус хыçне çитсе тăнă ытти троллейбуссем чăтăмсăррăн сигнал параççӗ – вӗсен те графикран тухмалла мар. Çакна курса, милиционер водителей ятне-шывне васкавлăн çырса юлчӗ те кайма ирӗк пачӗ. Кӗçех ытти троллейбуссем те малалла вӗçтерчӗç.

Çак пăтăрмаха ăнсăртран лекнӗ пассажира милиционер тимлӗн итлерӗ пулин те, хушăран кула-кула илмесӗр чăтаймарӗ. Ĕç мӗнре пулнине, такам шӳтлеме шутланине вăл ăнланчӗ, çавăнпа мӗскӗн пассажира тытса тăмарӗ, кайма ирӗк пачӗ, çапах та тепринче тимлӗрех пулма сӗнчӗ.

Сăра киоскӗ умӗнчи рабочисем, çак пăтăрмаха малтан пуçласа вӗçне çити курнăскерсем, сăра ӗçме мансах ахăрчӗç. Пăтăрмах сăлтавӗн хуçи çеç, вӗсем патне тепӗр хут пынăскер, ним пулман пек лăпкăн тăчӗ.

– Ĕçлесе илнӗ çур тенкӗне халь ӗнтӗ пама пултаратăр пуль? – ыйтрӗ вăл хăюллăн.

Темрен йӗрӗннӗн питне пӗркелентерсе, Фома сӗтел çине çур тенкӗ кăларса хучӗ.

– Çапах та путсӗр çын эсӗ, – терӗ вăл ăна кăмăлсăррăн.

– Эп сирӗнтен лайăххăн ыйтрăм, эсир памарăр-çке, – парăнмарӗ лешӗ.

– Алла пулин те, кун пек хăтланма юрамасть, – асăрхаттарчӗ ăна Фома.

– Эсир мӗн, манран лайăхрах-им? – хирӗçех тавлашрӗ этем. – Пурте курса тăтăр-çке, анчах пери те пулин хӳтте кӗчӗ-и?

– Санран татах та тем кӗтме пулӗ, ут хăвăн çулупа, – тарăхсах кайре Фома. – Пире айăплама пăхать тата. Ут, ут чышкă-маклашкă лекиччен!

Этем сӗтел çинчи çур тенке аллипе сăтăрса илчӗ те аяккалла мăнаçлăн пăрăнса утрӗ. Бригада çыннисем шăппăн, ним чӗнмесӗр сăра ӗçме васкарӗç...

# ЙĔКЕХӲРЕ

Паян иртенпех ăмăр çанталăк тăрать. Вăхăтăн-вăхăтăн кăштах йĕпхӳ çăвать. Çурла уйăхĕн вĕçĕ çеç пулин те, çил çурçĕр енчен вĕрнĕрен самаях сивĕ. Çавна курах-и, ав, çулçăсем сарала та пуçланă.

Кил хуçи арăмĕ Дуня паян тем сăлтавпа тĕкĕр умĕнче тăрать, кушăрханă аллисемпе пит çинчи ир килнĕ ватлăх йĕрĕсене якатать. Халех ватă теме çук-ха ăна, чунĕпе вара çамрăк тесен те юрать. Ара, çур ĕмĕр чикки урлă каçман вĕт-ха вăл халлĕхе. Çапах та ĕмĕрне пурăнса иртгернĕн туйăнать ăна. Анчах мĕнех курма ĕлкĕрнĕ-ши вăл пурнăçĕнче? Ялтан инçе çĕрелле ниçта та тухса курман. Канаша та Шупашкара çеç кайса килкеленĕ. Пĕрмай килçурт та, ача-пăча та выльăх-чĕрлĕх. Кану уйăхĕ тенине пĕлмест вĕт ял çынни. Çынсем, ав, темле курортсене, санаторисене кайса çӳреççĕ, тинĕс хĕрринче хырăмĕçурăмĕсене хĕртеççĕ. Вăл вара пĕр эрне те пулин алă усса ларса курман. Пульница тесен вара, ача çуратма çеç выртkалана вăл унта.

Çаксене шутласа тăнă май ирĕксĕрех шăпăртатса юхса анчĕç куççулĕсем хĕрарăмăн. Юрать çав самантра упăшки те, ачисем те пулмарĕç пӳртре. Кил картинчен ĕне сасси илтĕнчĕ. Дуня куççулĕсене шăлса типĕтрĕ те васкасах тула тухрĕ.

– Тем, эп ытлашши ирĕке ятăм пулмалла паян чуна, – хăй тĕллĕн мăкăртатрĕ çенĕкрен тухнă май.

Вара чупса тенĕ пек ĕçлеме пуçларĕ. Ĕнине вите умĕнчи лупас айне кĕртрĕ. Витрепе пиçнĕ çĕрулми илсе тухрĕ, ăна алăпа ватса комбикормпа юрчĕ, ĕне умне лартса пачĕ. Унтан аллисене ăшă шывпа çурĕ, ĕне çиллине те çуса тасатса илчĕ. Вара сĕт сума тесе ятарлă майланă лутра пукан çине ларчĕ те ĕçе пикенчĕ. Выльăх темерĕн! Вăл пĕр

вырӑнта тӑрасшӑн пулмарӗ, ураран ура пусса пӑркаланче, хӯрипе ҫатлаттара-ҫатлаттара илчӗ.

– Лӑплан-ха эс, Катюша. Мӗн килӗшмест тата сана паян? – ӗнене ачашшӑн лӑпкарӗ Дуня. – Тен, алӑсем ман ытла кушӑрка паян? – шутласа илчӗ вӑл, хӑвӑрт кӑна пӳрте кӗрсе ал лапписене, пӳрнисене вазелинпа ҫемҫетрӗ, вара каллех хӑй вырӑнне ларчӗ. Анчах тем пулнӑ паян ӗнене, халиччен пек вырӑнта чӑтӑмлӑ тӑмарӗ, тек тӑпӑртатрӗ, юлашкинчен тапса та илчӗ витрене, юрать-ха Дуня вӑхӑтра тытма ӗлкӗрчӗ ӑна, унсӑрӑн тӑкӑнса каятчӗ сума ӗлкӗрнӗ сӗт.

– Мӗн пулнӑ сана паян, Катюша? Такам кусӑхтарман пулӗ те? Чӑтмалла та мар-и вара кӑштах та пулин?

Ҫакна ҫеҫ калама ӗлкӗрнӗччӗ хӗрарӑм, ӗне шап! тутарчӗ ӑна ура чӗрнипе аллинчен. Мӗнле кӑна витрине тытма ӗлкӗрчӗ кил хуҫи арӑмӗ? Унӑн та чӑтӑмӗ пӗтрӗ, вӑл хулӑ илчӗ те ӗнене пӗтӗм чунран темиҫе хутчен ҫатлаттарчӗ. Лешӗ лупас кӗтессине хӗсӗнсе тӑчӗ.

– Хӑҫантанпа сӑватӑп ӗнтӗ сана, кун пекки нихҫан та пулманччӗ, тем инкекӗ сиксе тухнӑ ӗнтӗ санпа. Мура пултӑр, тӑрах эппин кӗтесре.

Хӗрарӑм витрине йӑтрӗ те пӳрте кӗрсе кайрӗ. Юлашки кунсенче ӗни сӗт чакарнине асӑрхарӗ-ха вӑл, анчах сӑлтавне кӗтӳҫсем ҫине янӑ. Тен, ахалех ҫылӑха кӗнӗ? Тен, чирленӗ, апӑрша выльӑхӗ? Ветеринара кӑтартма тивет ӗнтӗ. Кил чунне ахалех кӳрентертӗм тесе, Дуня ӗнене лӑплантарма тухрӗ. Анчах лупас алӑкне уҫрӗ те чутах лӑк! лармарӗ ҫӗр ҫине: кун пек япалана хӑйӗн пурнӑҫӗнче вӑл курма та, илтме те пултарайман. Утӑ патне хӑпармалли пусман аялти картлашки ҫинче... йӗкехӳре чӗвен тӑнӑ та ӗнен ҫиллине чаплаттарсах ӗмет. Лешӗ ним пулман пекех канлӗн кавлесе тӑрать. Ак кам валли упрать иккен вӑл сӗтне! Мур илесшӗ, тӗнче пӗтсе килет пулӗ!

Дуня хăрушшăн кăшкăрса ячĕ те кил хушшине вирхĕнсе тухрĕ, вара ĕçрен таврăнма ĕлкĕрнĕ упăшкине пырса çапăнчĕ.

– Мĕн пулчĕ, Дуня? Мĕн эс киксе чĕтрен?

– Унта... Унта... Йĕкехӳре... Пирĕн Катюшăна ĕмет...

– Мĕн сӳпĕлтететĕн, ăсран тайăлман пулĕ те?

– Ĕненмесен ху кайса пăх, анчах сенĕк илме ан ман.

Хĕветĕр сенĕк илчĕ те лупас алăкне уçрĕ. Чăнах та, пичке пек карăнса кайнă йĕкехӳре пусма картлашки çинчен шуса анать. Тарăхнă кил хуçи çиллессĕн чупса кĕчĕ те йĕкехӳрене пĕррех тирчĕ сенĕкпе. Лешĕнчен юнпа хутăш сĕт сирпĕнсе тухрĕ. Çакна курса ĕне хăрушшăн мĕкĕрсе ячĕ, мăйракисене малалла кăнтарса Хĕветĕр еннелле талпăнчĕ. Арçын аран тухса тарма ĕлкĕрчĕ лупас айĕнчен, сăлăпне те аран-аран тĕкĕлерĕ, вара, хаш! сывласа, çамки çине тапса тухнă сивĕ тара çаннипе шăлса илчĕ, унтан урисене аран сĕтĕрсе, çенĕк картлашки патĕнче тăракан мăшăрĕ патне çывхарчĕ:

– Дуня, пур-и унта пирĕн ăша лăплантармалли?

– Ара, ĕнер анчах сăра вĕретнĕ. Мĕнле чăваш вăл сăрасăр пултăр.

Дуня кăкшăм илчĕ те нӳхрепе анчĕ, кĕçех сăра ăсса тухрĕ. Хĕветĕр пĕр алтăра пĕр сывламасăр ĕçсе ячĕ. Арăмĕ те унран юлмарĕ. Хĕрĕсем каçхи апата килнĕ тĕле вĕсем ерипен-ерипен кăкшăма пушатрĕç.

Ĕне çĕрĕпе канăç памарĕ, пĕр вĕçĕм макăрчĕ, ниепле те лăплантарма май килмерĕ ăна. Çитменнине, никама та лупас айне кĕртмест, хăй те унтан тухмасть. Алăка тул енчен уç кăна – тӳрех мăйракисене кăнтарса пырать, анчах кил хушшине тухмасть. Ирпе кĕтĕве яма та май пулмарĕ.

Çапла пĕр эрнех иртсе кайрĕ. Ĕне палăрмаллах начарланчĕ. Çемье канашĕ вара ăна урăххипе улăштарма шутларĕ. Çавна май икĕ-виçĕ арçын ĕнене вăйпах аш-пăш комбинатне çавăтса кайрĕ.

Ĕнешĕн илнĕ укçапа Дуня хăйĕн пурнăçĕнче пĕрремĕш хут Хурă тинĕс хĕррине кайса килме шут тытрĕ. Тен, пĕрремĕш те юлашки хут пулĕ-и тенĕрен, килтисем унпа хаваспах килĕшрĕç. Пĕччене кичем ан пултăр тесе, мăшăрĕ те пыма пулчĕ. Кĕçех пуйăс вĕсене кăнтăр еннелле илсе кайрĕ.

# ÇĔПРЕ

Кăнтăр апатĕнчен таврăнакан Миша гараж еннелле аран-аран утса пырать, пит тăрăх юхакан тарне ал лаппипе шăлса илсе ĕлкĕреймест. Гараж патне çитсен вăл çăмăллăн сывласа ячĕ, кунти сулхăнра çавах та кăштах уçăрах, сывлама та канлĕрех.

Унпа пĕрле ĕçлекен Вася тип апатпах çырлахнă, ларкăч çине тăсăлса выртнă та шăрпăкпа шăл хушшисене чава-лать. Куçне маччана тĕлленĕ те тем çинчен тимлесех шутлать.

– Эй, Ваçлей, мĕн шутласа тупрăн?

– Кăштах укçа ĕçлесе илме май тупрăм-ха. Мĕн вăл пирĕн тăхăр вунă тенкĕлĕх ĕç укçи, ним валли те çитмест, – кăштах куçне хĕссе кулса илчĕ те шăпланчĕ.

– Чуна ан кĕттер, кала хăвăртрах, мĕн шутласа кăлартăн?

– Хамăр ĕçе кăнтăрлачченех вĕçлерĕмĕр, предприятисенчен урăх заявкăсем çук. Ăнкаратăн-и?

– Чухлатăп пек.

– Сулахай укçасăр йывăр, çавна май пуçа ырă шухăш кĕчĕ пек. Пуянрах çынсен нушникĕсене çĕпре пăрахса тухсан мĕнле сан шутпа?

– Аван мар пулса тухать.

– Эх, Миша, ан шиклен, çыннисем ан пĕлччĕр çеç.

– Эс мĕнле те, эп хутшăнас çук ку ирсĕр ĕçе.

Пĕр кана гаражра шăплăх тăчĕ. Миша верстак çинче выртакан кивĕ карбюраторпа аппаланчĕ, сĕнӳ пирки шутламарĕ те. Вася ăна хулпуççинчен пырса тĕкрĕ.

– Ан хыт, пар висĕ тенкĕ. Эп те хамăнне хушатăп, вара лавккана çитсе килĕп. Çĕпри пурччĕ-ха унта.

Сăмсипе кăмăлсăррăн мăшлатса, Миша сӳрĕккĕн укçа кăларчĕ те верстак çине пăрахрĕ. Вася укçана сăптăрса илчĕ те васкавлăн гаражран тухса утрĕ. Тек вара ĕç вырăнĕнче курăнмарĕ вăл.

Тепĕр кунне кăнтăрлаччен вăхăт яланхилле чиперех иртрĕ. Вася хăй йăлипе пĕрмай шӳтлерĕ, йăл-йăл кулчĕ. Кăнтăр иртсен пĕр арçын пашкаса чупса çитрĕ.

– Тархасшăн пулăшăр, нушникри шĕвек теме пула кăпăкланса урлă кая пуçларĕ, кил картине юхса тухма пулта-рать, чăтма çух шăршă кĕрет тата. Айтăр хăвăртрах, тасатса парăр, тархасшăн.

– Пирĕн хака пĕлетĕр: аллă тенкĕ.

– Ытлашширех мар-ши?

– Килĕшместĕр пулсан, хăвăр ĕçлĕр.

Пуç тавра çавăрса кăштах шутласан, арçыннăн килĕшмех тиврĕ. Вăл аллине сулчĕ çеç.

Паллах, хыт кукарла пулса ĕç тăваймăн ун пек чухне. Вася çакна ăнланса илчĕ, кабинăна чăмрĕ те машинăна тапратрĕ. Ĕçе начас вĕçлерĕç вĕсем. Вася хуçапа татăлчĕ те укçана хăйĕн кĕсйине чикрĕ. Хаваслă кĕвĕ шăхăрса, машинăна гараж еннелле чуптарчĕ. Унта тепĕр клиент кĕтсе тăрать вĕсене, машинăна курсан, чăтăмсăррăн хирĕç чупрĕ.

– Айтăр хăвăртрах ман пата.

– Хакĕ паллă пулĕ сире?

– Мĕн хакĕ пирки каласмалли пур, айтăр хăвăртрах!

Çапла вара касчен виççĕр тенкĕ тупăнчĕ. Вася кăмăллăн укçа шутласа ларчĕ, унтан çурмалла пайларĕ те

çуррине Мишăна тăсса пама тăчĕ. Лешĕ хăнк та тумарĕ, пуçне пăрчĕ çеç.

– Ил теççĕ сана.

Миша пĕр сăмах та шарламарĕ, кăмăлсăррăн та намăсланнăн пуçне усрĕ.

– Хăвăнне ху пĕл эппин.

– Намăс мана ку укçана илме.

– Илместĕн пулсан мана хама тивет.

– Ытла та намăссăр-çке эсĕ.

Лăх-лăх кулкаласа Вася 150 тенкĕне ларкăч çине хучĕ те кабинăран тухрĕ. Миша имене-именех укçине кĕсйине чикрĕ.

Çавăн хыççăн вĕсен кашни кунах укçа тупăнса пычĕ. Вася лавккана çĕпре илме ўркенмесĕрех чупрĕ.

Пĕррехинче вăл вараланчăк тумпа гаража хашкаса çитрĕ. Хăйĕнчен чăтма çук шăршă кĕрет.

– Эс мĕн, нушнике кĕрсе ўкмерĕн пулĕ те?

– Çук, ирĕксĕрех чăмтарчĕç. Эп нушнике çĕпре янине пĕр хуçи асăрхарĕ те çухаран ярса илчĕ, вара нушник хыçĕнчи ятарлă шăтăка усрĕ тĕ мана шала тĕксе ячĕ. Пĕтĕм шăм-шак çунать, куратăн пулĕ, алăри ўт хĕрелсе кайрĕ. Чăтма çук кĕçĕтет тата.

Çакăнпа вĕсен "тупăшлă ĕçĕ" вĕçленчĕ.

# ТАБЛЕТКĂСЕМ

### Калав

Кантăкран хĕвел çути сăрхăнса кĕрет. Тулта ĕнтĕ ăшă, тек кăмака хутма кирлĕ мар. Юр кайса пĕтнĕ пулин те çĕр ĕçĕ тума иртерех-ха. Кил картинче выльăх-чĕрлĕхпе аппаланса ывăнчĕ Кĕркури, пўрте кĕчĕ, телевизор ячĕ те меллĕн диван çине вырнаçса ларчĕ. Шăпах реклама параççĕ имĕш, темĕнле таблеткăсем пирки пĕлтереççĕ. Вĕсем

арçынсене импотенцирен хăтараççĕ имĕш. Çакна илтсен Кĕркури пĕр вырăнта сиксе илчĕ, хăвăрт тăчĕ те ручка илсе хут çине таблеткă ятне çырса хучĕ: «Виагра». Хумханнипе урай тăрăх кумрĕ, Йĕпреçе мĕнле çитсе килмелле-ши тесе шутларĕ. Çак вăхăтра пÿрте Андреевка ялĕнчи Хĕветĕр хăти пырса кĕчĕ.

– Кĕр, кĕр, иртсе лар, – терĕ Кĕркури.

Хĕветĕр яланхи йăлипе кăмака патне пычĕ.

– Эс мĕн çав тери хумхануллă, тем сиксе тухман пулĕ те? – ыйтрĕ Хĕветĕр.

Кĕркури аллине çеç сулчĕ, витререн куркапа шыв ăсса ĕçрĕ.

– Пуласса нимех те пулман-ха. Ав, телевизорпа реклама параççĕ. Арçынсене вăйсăрлăхран пулăшакан таблеткăсем пур имĕш, ак, ятне çырса та хутăм хут çине.

– Мĕнле вăйсăрлăхран, темĕнле ĕç тăвасшăн мар пулĕ те?

– Ĕçре мар кунта апăрши, хĕрарăмсенче. Вырăсла каласан, импотенцирен пулăшать теççĕ.

– Эс мĕн, хăта, йÿтемен пулĕ те е хĕрарăмсем патне чупса йăлăхмарăн?

– Вăл нихçан та никама та йăлăхтармĕ. Сакăр вун виçĕ çул пурăннă пулин те чун лăпланасшăн мар, çавăнтах туртăнать. Пурнăçĕ çавăнтан тытăнса тăрать те.

– Вăт çаптарать, кама та пулин калас пулсан ĕненмĕ.

– Эс шавласа ан çÿре, – Кĕркури Хĕветĕр патне пырса хул пуççийĕнчен тытрĕ. – Тархасшăн, кайса кил Йĕпреç аптекине, мана хама аван мар, урасем те вăйсăрланчĕç, сураççĕ. Мĕн каласси пур, пĕтĕм шăм-шак ыратать.

– Мана аван пулĕ тетĕн-им? Эп те ватă.

– Эс манран вунă çул кĕçĕн. Çитсе кил ĕнтĕ.

– Тем тумалла ĕнтĕ, хăта?

– Сахалтарах сÿпĕлтетсе ĕç тумалла.

Кĕркури арчине уçса сăран енчĕк кăларчĕ, ăна уçса пилĕк пин тенкĕ илчĕ.

– Ку ытла та пысăк укçа-çке.

– Ун пек ырă ĕçшĕн шел мар укçи, ме, тыт, – вăл укçине вăйпа тенĕ пек Хĕветĕр кĕсйине чикрĕ.

Хĕветĕр автобус чарăнăвĕ еннелле утрĕ. Вăл çитнĕ тĕле шăп автобус пырса чарăнчĕ. Паллана çынсем ыйтмасăр чăтаймарĕç:

– Ăçта каян, Хĕветĕр? – терĕç.

– Ĕçпе Йĕпреçе çитсе килмелле-ха.

Хăйне аван марла туйрĕ Хĕветĕр, никампа та ытлашши сăмах вакламарĕ. Вăл ăçта кайнине çынсем чухласа илесрен пăшăрханчĕ, паллана çынсене тĕл пулсан сывлăх сунса çеç ирте-ирте кайрĕ. Кĕçех аптека тĕлне çитрĕ, чарăнса тăрса сывлăш çавăрса илчĕ, вара тин шала кĕчĕ.

– «Виагра» текен таблеткăсем пур-ши сирĕн?

– Пур-çке, çичĕ пин тенкĕ тăрать, ав. кассăна тӳлĕр.

Хĕветĕр кĕсьерен укçине кăларчĕ. Хăйĕн укçине хушсан та ултă пин тенкĕ çеç тупăнчĕ. Вăл аптăрана енне ун-кун пăхса илчĕ. Çавна курса çамрăк хĕр хи-хик кулса ячĕ. Хĕветĕрĕн пичĕ çуна пуçларĕ, вăл хăвăрттăн урама тухрĕ, автобус кĕтмесĕрех çуран утрĕ Туçи ялне.

Кĕркури ăна кил картинче кĕтсе илчĕ.

–Ну мĕнле, туянтăн-и?

– Сан таблеткусемшĕн намăс курма тиврĕ. Çитмерĕ эсĕ пана укçа.

– Мана шел мар, кала мĕн чухлĕ кирлĕ?

– Тек ура ярса пусмастăп эп унта. Мĕн пек намăс пулчĕ мана çамрăк хĕр умĕнче. Çĕр тĕпне путма хатĕрччĕ эпĕ çав самантра. Ме, тыт хăвăн укçуна, – терĕ те Хĕветĕр, урăх пĕр сăмах та чĕнмесĕр тухса утрĕ хапхаран.

Эрне кун Шупашкартан кĕрӳшĕ шурă «Волгăпа» вĕçтерсе çитрĕ. Кĕнĕ-кĕмен сĕтел çине кучченеçсем кăларса хучĕ. Анчах вĕсем савăнтармарĕç Кĕркурие. Вăл

кĕрўшне хулĕнчен тытрĕ те кăмака хыçне туртса кĕчĕ, унтан шăппăн ыйтрĕ:

– Кайса кил-ха Йĕпреçе, туян аптекăра ман валли «Виагра» таблеткăсем. Рекламăра импотенцирен пулăшать тесе ырларĕç. Мана хама кайма аван мар, ку йўтенĕ теме пултарĕç.

Çакна илтсен кĕрушĕ хырăмне тытсах ахăлтатса кулса ячĕ.

– Култаратăн та, хуньăм.

– Сана, мĕн, йывăр-им кайса килме? Ман пирки мĕн шутлĕç сутуçăсем?

– Вăт каларĕ те, сана намăсрах-и, е мана, хĕрĕхри арçынна?

# КАССА ВĂРРИСЕМ

КАШНИ кун пĕр маршрутпах çўретĕп пулин те пĕртте йăлăхтармасть, кичем те мар, мĕншĕн тесен кунсеренех мен те пулин çĕнни, кăсăклантараканни тупăнсах тăрать. Çавăн пек ĕнтĕ вăл хула хушшинче пассажирсене турттарасси – тĕрлĕрен çын пулать вĕсен хушшинче: чĕмсĕрри те, калаçма кăмăллаканни те, чăркăшши те, сĕмсĕрри те – пĕр сăмахпа, интереслĕ курав. Çавăнпа кăмăллать те хăйĕн маршрутне автобус водителĕ Володя.

Паян вăл иккĕмĕш сменăра ĕçлерĕ, шĕкĕр Турра, юлашки рейсченех йăлтах йĕркеллех иртрĕ. Çĕкленчĕк кăмăлпа таврăнчĕ вăл автобазăна, тĕрĕс-тĕкел автобусне хăйĕн яланхи вырăнне лартса хăварчĕ те хуралçăпа сыв пуллашса килне кайрĕ.

Тепĕр кунне ăна гараж заведующийĕ кăмăлсăррăн кĕтсе илчĕ:

– Эс мĕншĕн хăвăн автобус кассине кĕретĕн?

– Калаç та – калаçма пĕл.

– Эп чиперех калатăп-ха та, çапах та сана тĕрĕслеме тивет.

– Мана мĕн тĕрĕслемелли пур, юлташсем курнă эп автобуса лартнине.

– Çапли çапла пулĕ те, анчах кам кĕме пултарнă-ха кассăна?

– Ку вара сирĕн явапу. Манăн мĕн, çĕрĕпех хуралламалла тет-и кассăна?

– Ас ту, Володя, сăмсуна ытлашши ан каçăрт.

– Эп хам шухăша калатăп, кам чарма пултартăр мана ăна пĕлтерме?

– Ан шутла пирĕн водительсем çитмеççĕ тесе, халь тесен халь çĕр çын килме пултарать ĕç вырăнĕ шыраса.

Малалли калаçу усăсăр пулассине ăнланса Володя: "Эй, санпа", – терĕ те аллине сулса çаврăнса утрĕ.

Тепĕр кунне каллех çав калаçăвах пуçланчĕ:

– Володя, юлашки хут асăрхаттаратăп, кайран сăмах-юмах тек пулмĕ.

– Анланмастăп, мĕнпе хăрататăр?

– Докладной çырса пама тивет, унта вара органсем ĕçлеччĕр.

Пĕр-пĕрин куçĕсенчен сивлеккĕн пăхса уйрăлчĕç вĕсем. Володьăн кăмăлĕ палăрмаллах хуçăлчĕ. Рейса вăл сӳрĕккĕн тухрĕ. Юри тенĕ пекех, мотор пĕрмай чăхăмларĕ. Смена вĕçнелле те пăсăк кăмăлĕ юсанмарĕ унăн. Ятарлă тенĕ пекех, юлашки рейсра çурма çулта автобус ванса кайрĕ. Пассажирсем шавларĕç, анчах та мĕнех тăвайăн, вĕсене автобусран кăларса алăксене хупма тиврĕ. Вăл вара кабина алăкне питĕрчĕ те çуранах автобазăна утрĕ. Хăть палланă пĕр водитель тĕл пулас çул çинче, çук вĕт.

Автобаза хапхинче шăв-шав кĕтсе илчĕ ăна. Ун территорийĕнчен ăна хирĕç темиçе хĕрача чупса тухрĕ, хăйсем пĕрмай йĕм резинисене турта-турта илеççĕ. Вара пĕççисем тăрăх шăпăр-шăпăр вак укçа юхса тухса асфальт

çинче чăнкăр! сапаланать, айккинелле куса-куса каять. Вĕсен хыçĕнчен милиционерсем шăхлич шăхăрса чупаççĕ.

Кайран автобаза кил картинче пĕр эрне хушши вак укçа тупкаларĕç водительсем, сăра ĕçсе ăшĕсене кантарчĕç.

# МУРКĂПА ШУРКА

Фабрикăра ĕçлеме пуçланăранпа çирĕм çул çитет ĕнтĕ, хăю тертекен цехра ялан шавлă та тусанлă пулин те Маруçăн çав-çавах чунĕ çакăнтах туртать. Пĕрле ĕçлесе, йывăрлăха тӳссе ирттернĕ хĕрарамсем уншăн çывах та хаклă. Çитменнине тата ĕç укçийĕ те сахал мар тухать. Туслă, пĕр шухăшлă эртел вĕсен. Пĕрле чухне кăмăл уçăлать. Пушă вăхăтра юрлас та, ташлас та килет. Пырать çапла пурнăç малалла: ваттисем канăва каяççĕ, вĕсем вырăнне çамрăк хĕрсем килеççĕ...

Пите аванччĕ. Анчах та савăнăçа пĕр япала пăсса хучĕ. Фабрика çывăхне аш-какай комбиначĕ лартнă хыççăн Маруççем цехне те кĕтмен хăнасем йăкăртатма тытăнчĕç. Вăрăм хӳреллĕ патвар йĕкехӳресем сĕмсĕррĕн ăçта килчĕ унта чупаççĕ. Вĕсенчен сехĕрленнĕ хĕрсем шари! çухăрса ярса ĕçе пăрахаççĕ. Тискер чĕрчун ытла йĕксĕк иккен – ăша пăтрататать. Çакăн хыççăн цехра, пĕтĕм фабрикăра «чĕнмен «хăнасемпе» хирĕç кĕрешӳ пуçланчĕ. Санэпидеми станцийĕнчен килнĕ «шурă халатлă» хĕрарăмсем имçам сапса тухрĕç. Вăхăтлăха курăнмаççĕ йĕкехӳресем, унтан каллех хунаса каяççĕ.

Мĕн тумалла капла! Пĕрре хăрушă, тепре ĕç тухăçлăхĕ чакать. Калаçрĕс-тавлашрĕç те чун каниччен хĕрарăмсем, юлашкинчен вара Маруç сĕнĕвĕпе килĕшрĕç: кушак кирлĕ! Тепĕр кунне Маруç кӳршĕсенчен, унăн тантăшĕ килĕнчен икĕ хип-хитре çура илсе килчĕç. Эртел вĕсене хапăлласа йышăнчĕ. Сĕт ĕçтереççĕ, аш-пăш çитереççĕ. Выляççĕ

пĕчĕкскерсем, станоксем хушшипе вĕлтĕртетсе çӳреççĕ. Пĕрне Мурка, теприне Шурка ятлă хучĕç. Туслашрĕç.

Тĕлĕнмелле, кушак çурисем килнĕренпе цехра йĕкехӳресем сахалланчĕç. Пĕр татăк хӳреллĕ çăткăн çеç «хуралçăсенчен» хăрамарĕ-ха, хушăран курăнса хĕрсене сехĕрлентерчĕ, унта-кунта тустарчĕ. Имçам та ним мар уншăн, кушак çурисем те...

Вăхăт иртнĕçемĕн Муркăпа Шурка самай тĕрекленчĕç. Пĕррехинче Маруç ĕçе пуринчен те маларах çитнĕччĕ. Хыаăнса тăхăнмалли пӳлĕме кĕрсен вăл хăранипе чутах кайса ӳкетчĕ. Шкафран сиксе тухнă татак хӳреллĕ урана перĕнсе кĕтесселле вирхĕнчĕ. Çав вăхăтрах ун çине Мурка сиксе ларчĕ. Йĕкехӳре тем самантра ăна çыртса сирпĕтсе ячĕ. Шурка та тусне пулăшма васкарĕ, тăшмана мăйĕнчен ярса илчĕ. Виççĕн çухăрашса урайĕнче айĕн-çийĕн пăтранчĕç, тавралла юн сирпĕтсе пĕтерчĕç. Акă, Шурка вăрăммăн мяуклатса тăсăлса ӳкрĕ. Мурка тата хастарланчĕ, йĕкехӳрене парăнтарчĕ-парăнтарчех, хаяр тăшмана çурăм çине савăрса хурса Маруç умне пырса пăрахрĕ, унтан тусĕ патне сулланса çитрĕ, ăна çуллама пуçларĕ. Ĕнтĕ ку ӳкерчĕке пӳлĕме кĕрсе тăнă хăю тĕртекен ытти хĕрарăмсем те курчĕç.

Маруç урайĕнче выртакан Шуркăна алла илсе ачашларĕ, анчах лешĕ куçне уçмарĕ, йăшăлт та тумарĕ, Мурка макăрса ура тавра яванчĕ.

Кăнтăр апатĕнче Шуркйна пĕтĕм цех эртелĕпе фабрика картишĕнче пытарчĕç. Пурте саланчĕç. Мурка çеç тусĕн вилтăприйĕ çинче татăк хӳреллĕ йĕкехӳре амантнă урине çулласа чылайччен ларчĕ.

# ПУСКИЛ

Атăл хĕрринче çĕнĕ çурт ÿссе ларчĕ. Питĕ капăр. Кирпĕчпе купаласа хăпартрĕç ăна. Тул енне шурă кирпĕчпе илемлетрĕç. Çавăнпа ордерсем те хăвăрт саланса пĕтрĕç пуян çыннисен аллисене.

Çуртне пурăнма кĕнĕ-кĕмен пуçланчĕ çĕнĕрен ĕç-пуç. Пĕри стена ватса пÿлĕм ăсталать, тепри стенине урăхла купалать, кам мачча капăрлатать, кам урайне линолеум е паркет сарать, кам ваннăйĕнче е кухньăра плитка çыпăçтарать, унитаз та бачок улăштарать. Ют патшалăхăн хамăрăннинчен лайăхрах теççĕ пулмалла. Пĕр сăмахпа, кунĕпе шăв-шав тăрать çуртра. Теприсем çур çĕрччenех тем шаккаççĕ. Кашни хăй пĕлнĕ пек хăйне май хăтлать хваттерне.

Гена та кредитла хваттер илнĕ ку çуртра. Кивĕ хваттерне сутса янă. Анчах çав укçа çитменрен кивçене кĕрсе пĕтнĕ. Çĕнĕ сĕтел-пукан пирки шутламалли те çук, киввипех çырлахма тивет. Кивĕ диван çинчех выртса тăрать вăл. Çапах та хăçан та пулин çĕннине туянма ĕмĕтленет-ха. Пĕррехинче вăл балконра хăмаран урай саратчĕ. Алăкран такам шаккарĕ. Гена алăк уçма утрĕ. Шăнкăрав лартма ĕлкĕрейменччĕ-ха. Алăка уçрĕ те коридорта трико тăхăннă, шурă çÿçлĕ арçына курчĕ. Лешĕн кулли хăлха патнех çитнĕ:

– Эпĕ сирĕн пускил пулатăп. Хирĕçри хваттертен.

– Аван, хавас сирĕнпе паллашма, – Гена алăк урати урлах алă тăсрĕ.

– Аван мар ку, алăк урати урлă алă памаççĕ, кĕрем-ха сирĕн пата, – мăкăртатрĕ вăл. Вăшт çеç хваттере кĕрсе тăчĕ, тепĕр хут алне чăмăртарĕ.

– Йăли-йĕркине пĕлсех каймастăп, – хулпуççине сиктеркелерĕ Гена.

– Пĕлмелле. Ман асанне çĕр йăла пĕлет, – пускил ĕнсине хыçса илчĕ. – Мĕншĕн эп килтĕм-ха? А-а, аса илтĕм. Ман кавир çакмалла та...

– Аван япала.

– Сирĕн дрель пур-и?

– Пур, кĕçех хам та алла тытасшăн-ха.

– Пĕр-ик сехетлĕхе те пулин памăр-ши?

– Вăл ман çĕнĕскер, ăна никама та шанса памастăп, уйрăмах, палламан çынсене.

– Ан иккĕлен, эпĕ сирĕн пускил вĕт, – аллипе трикопа тапочки çине сĕлтсе кăтартрĕ вăл. – Сире уншăн çĕр тенкĕ парăп. Ĕç вĕçлесенех таварса паратăп дреле.

Тăсса панă укçине Гена илчĕ. Кладовкăран дрель çĕклесе тухрĕ те килнĕ çынна тыттарчĕ.

– Пăрисем те пур-и сирĕн?

– Сверлосем-и? Пур-çке. – Гена ăна пĕр ывăç пăра тыттарчĕ.

Тăвата-пилăк сехет иртрĕ, пускил дрель килсе памарĕ. Тепĕр кун ирхине Гена хăй каçрĕ пускил патне. Алăкне шăнкăравларĕ. Ăна шакла пуçлă арçын уçрĕ.

– Сире кам кирлĕччĕ?

– Çак хваттер хуçи кирлĕ.

– Эпĕ унăн хуçи. Мĕн ыйтупа?

– Ĕнер пирĕн пата шурă çӳçлĕ арçын пычĕ, пускил пулатăп терĕ, йăпăртлăха дрель ыйтрĕ. Каялла таварса памарĕ...

Иккĕшĕ те шăпланчĕç: пĕри кичеммĕн пăхрĕ, тепри – кулăпа.

– Мĕн, эсир пĕлетĕр-и ăна?

– Пĕлмесĕр, ĕнер вăл мана та пускил пулатăп тесе ĕнентерчĕ, дрель илсе кайрĕ.

– Вăт сана пускил. Иксĕмĕре те улталанă вĕт.

Малтан вĕсем ултавçăна тĕрлĕ сăмахсемпе ятларĕç, унтан иккĕшĕ те ахăлтатса кулса ячĕç. Вĕсен сассине илтсе ытти пускилсем тухрĕç.

– Мĕн пулнă сире, çав тери савăнăçлă кулатăр?

– Ара, ĕнер пĕр арçын пире иксĕмĕре те улталанă, дрель илсе кайнă.

– Манран та илсе тухса кайрĕ, – пăшăлтатрĕ Пĕри.

Ку хутĕнче ушкăнпа тата хытăрах ахăлтатса кулса ячĕç. Кайран вĕсем леш «пускил» чылай çынран дрель илсе кайнине пĕлчĕç. Мĕн тери улталаннă! Ăçта тытмалла ăна?

Гена хваттере кĕчĕ те тарăхнипе диван çине ларчĕ. Тем шăтăр-шăтăр турĕ:

– Кунта та ăнмасть. Юсама тивет ĕнтĕ.

Гена дивана тĕрĕслерĕ: вăрăм болтсем кирлĕ. Вăл пасара уттарчĕ. Хапхаран кĕнĕ çĕрте тĕрлĕ вак-тĕвек сутаççĕ. Пĕри дрель сĕнет. Гена тимлĕрех пăхрĕ те хăйĕн дрельне палласа илчĕ.

–Туян, вĕр-çĕнĕ, лавккара тăхăр çĕр тенкĕ тăрать, санран çĕр тенкĕ сахалтарах ыйтăп.

– Ку манăн дрель вĕт.

– Мĕнпе çирĕплетме пултаран?

– Дрель паспорчĕ пур.

– Чăнах-и?

– Чăнах çав, хăçан туяннине те çырнă унта.

– Эп пур, кăштах укçа тăвасшăнччĕ, ăна пĕр çын парса хăварчĕ.

– Шурă çÿçлĕ-и?

– Шаклаччĕ.

– Эппин хыртарнă.

– Улт çĕр тенкĕпе сĕнчĕ, эпĕ пилĕк çĕр патăм.

Гена дреле сумккине чикме васкарĕ. Сутуçă ăна чарчĕ:

– Эс мĕн? Эп уншăн укçа тÿленĕ вĕт.

– Манăн дрель, çавăнпа ярса тытрăм. Хирĕçетĕн пулсан, тавай, милицие чĕнер те – протокол çырар.

Сутуҫă нимĕн те калама пĕлмерĕ – хăй айăплă мар-и, йӳнĕ хака хапсăнчĕ-ҫке.

– Ак сана виҫ ҫĕр тенкĕ, ыттине кам сана сутнă, ҫавăнтан илен.

– Хăть уншăн тав сана, халь ăҫтан тупăн ĕнтĕ вăл ҫынна?

Гена хăйне кирлĕ болтсене те туянчĕ, дреле тавăрнăшăн та кăмăллă юлчĕ.

## ЭХ, КАТЕНЬКА, КАТЕНЬКА...

Кăҫал хĕл пĕлтĕрхинчеи маларах ларчĕ. Тӳперен, пачах кĕтмен ҫĕртен, аслăкăн-аслăкăн юр йăтăнса анчĕ. Внсĕ талăк ҫавнашкал чыхăнтарнă хыҫҫăн чĕркуҫҫи таран хыврĕ. Тăваттăмĕш талĕкĕнче ирпе тӳпе янкăрланчĕ. Обь ҫывăхĕнчи юханшыв вара малтанхиллех кĕрлерĕ-шавларĕ, юрлă-пăрлăха паттăррăн парăнмарĕ. анчах та сивĕ «алли» хăйĕннех турĕ, ăна кĕҫех кĕрлсе-шавлама тăп чарчĕ, часах ун ҫийĕн пăр янкăррăн ҫуталчĕ. Вĕресе тăракан авăрсем ҫеҫ шăнаймарĕҫ-ха, ҫаврăнса пăтранчĕҫ. Ҫынсем ҫав ахăр вырăнтан пăрăнса иртрĕҫ, шыва кĕрсе ӳкесрен шикленсе-хăраса утрĕҫ. Им-виҫ кунтан юханшыв урлă каҫу йĕркелерĕҫ. тепрер эрнерен вара – лашасемпе те кĕрлеттерсе ҫӳреме тытăнчĕҫ.

Ҫак Обь юппин хĕрринче тахҫанах пĕр-пĕччен старик пурăнать. Хĕрĕх пĕрремĕшĕнче, ывăлĕсем Мускав патĕнче, пĕр ротăра паттăррăн ҫапăҫса, пуҫ хуни ҫинчен хыпар илсен, вăл чутах тăнран каятчĕ. Амăшĕ те ҫак усал хыпара пĕлсен, чăтма ҫук кулянчĕ, унăн чĕринче темскер пулчĕ, сывлĕхĕ начарланчĕ, урине тахăшĕ ҫавапа касрĕ тейĕн, утаймарĕ вăл, пĕчĕк ача пек вырăн ҫинчен хăй тăраймарĕ, юлашкинчен вара типсе-типсе ҫитнĕ аллине тăсрĕ те Гришăпа сывпулашрĕ, ĕмĕрлĕхех... Упăшки нимĕн те

тăваймарĕ, аптăранипе хăйĕн те пуçĕ çаврăнчĕ. Пĕччен юлнă хыççăн ун пурнаçĕ йывăрланчĕ, вăл хăйĕн шăпине йĕре-йĕре сивлерĕ, çапах та пĕччченех хăйне май кăштăртатса çӳрерĕ. Пӳрчĕ ĕнтĕ хăрах енне çĕрсе тайăлчĕ, пĕчĕкленчĕ, хуçи пекех лăпчăнсах кукăрăлнăн туйăнчĕ. Пĕр çăмламас йытти кăна чупкалать, Гриша ури çумне сĕтĕрĕнсе чунне çырлахтарать. Ара, сунара çӳреме вăхăт çитнине систерет-çке-ха.

– Пĕлетĕп, Найда, эсĕ аса илтермесĕрех туятăп.

Йытă ачашланма чарăнчĕ, хуçине куçран чăрр! пăхрĕ те айăплăн йăнăшса ячĕ. Юлашки вăхăтра хуçин шăмă сыппи ыратать, ăна йытти ăнланмасть, вăл инçенелле çӳреме пултараймасть. Гриша çавăнпа ухутана тайгана тухма васкамарĕ. Анчах яланлăха хăнăхнă чунĕ ăна ялан вăрманаллах астарать.

Вăй пур чух вăл пулла çӳрет-ха, нумайрах-ытларах тытса, тăранса-çисе пурăнма хатĕрлесшĕн. Кимĕпе аякка çӳремерĕ, тетеле юханшыв хĕрринчи пӳртĕнчен инçех мар лартрĕ. Кăçал шыв чакре те пулă кĕме пăрахрĕ. Пуçа çаплах пĕр шухĕш канăç памарĕ: темле пулсан та сунара çӳреме тытăнмаллах пулĕ унăн.

Пуçра каллех яланхи шухăш: малтан пулă ытларах тытасчĕ... Çавăнпа яланхи пекех юханшыв хĕррине васкарĕ, кунта вăл хăйне иккĕмĕш килти пек туйрĕ, темле чĕрĕ вăй ăша çĕкленсе хавхалантарчĕ, пурăнас килсе кайрĕ. Вăл вара йывăç авăрлă лумпа çӳхе пăра татăкăн-татăкăн катрĕ. Хăвăрт çеç виçĕ вака тетел лартрĕ те вĕсем ăçтине паллă турĕ, вакĕсем ĕнтĕ шăнма та тытăнчĕç. Старик кăкăр тулли çăмăллăн, пĕр кана сывларĕ, пăр çинче выртакан тир алсине тăхăнса аллине ăшăтрĕ. Халь унăн кунтан ниста та каяс килмерĕ, çут çанталăк илемлĕхне лекрĕ. Йывăç турачĕсене пас тытнă, вĕсем çине шĕлкеме кĕленчи çакса янĕ пекех туйăнать. Вăл киленсе тăчĕ-тăчĕ те: «Эх, тайга,

тайга... Эп сансăр пурăнаймастăп – эсĕ те мансăр çук...» – тесе хучĕ.

Çывăхра сасартăк темле шăв-шав илтĕнчĕ. Гриша кăлт сиксе илчĕ те çаврăнчĕ, тӳрех асăрхарĕ. Икĕ арçын малта сиккипе чупаççĕ, хыçран вĕсене лашапа тепĕр арçын хăвалать, самантран-саманта вăл лашине пушăпа хĕртсе-вĕнтсе хăвăртрах вĕçтерме васкатать. Кĕçех çуна тайăлчĕ те тӳнчĕ. лаши шыв пулăхне тăсăлса анчĕ. Арçынсем, малтан епле чупнĕ пекех, вăрман еннелле, çаврăнса пăхмасăр, çиçтерчĕç. Гриша та пулăх патнелле ыткăнчĕ, унта лаша кĕçенчĕ, пулăх капкăнĕнчен тухаймарĕ. Пăр çумне пуçĕпе çакăнчĕ, суранран юн юхма тытăнчĕ, вăл çунинчен çапах вĕçерĕнеймерĕ. Унăн мăйне хăмăт пăвларĕ, тапаçланнипех вара вăл шыва путса çухалчĕ, çуни çес шыв çийĕнче, çыран хĕрринчи пушă кимĕ пек, тăрса юлчĕ. Гриша васкаса, рюкзакран вĕрен туртса кăларчĕ, вĕçне тĕвĕлесе ункă турĕ те шывра путакан çине хăвăрт ывăтрĕ, тӳрех аллинчен çаклатрĕ ăна. Çывăхрах шăнса ларнă пĕрене асăрхарĕ, вĕрене унтан кайса çаклатрĕ, хăй патнелле мĕнпур вăйран туртрĕ, хăй ассăн-ассăн сывларĕ. Аллисем чĕтрерĕç, çапах та, çавăрчĕ-çавăрчĕ вĕрене вăл. Шывран хăпарнă çынна унтан йĕлтĕр çине хучĕ, хăйĕн килти ытти япаласене пăрахса, килелле вĕçтерчĕ. Ах, çав, темле йывăр пулсан та ватта, вăл инкеке лекнĕ çынна чиперех туртса çитерчĕ килне. Киле çитсен, пилĕк минут пек, ним тăваймарĕ, пĕтĕм кĕлеткипе сиксе чĕтрерĕ, куç хупса иличчен пек канса выртрĕ те чĕтреме пăрахрĕ. Пăрланса ларнă çынна сĕтел çине йăтса хучĕ те ун çи пуçне хыврĕ.

– Ара, ку Катенька вĕт, пулă хуралçи пирĕн – ак тĕлĕнтермĕш.

Вăл çиçĕм пек хăвăртлăхпа шкапран кĕленче туртса кăларчĕ, çавăнтан спирт ярса илчĕ те унпа хĕрĕн пĕтĕм кĕлеткине сăтăрчĕ, пĕр çĕр грамм пек çăварĕнчен ячĕ. Унтан вăл унăн кĕлеткине хир сыснин çăвĕпе сĕрчĕ. Тăна

кĕменскерне утиялпа чĕркерĕ те койка çине йатса кайса вырттарчĕ. Хăй те ывăннăскер, эрех ĕçрĕ те çавăнтах тĕлĕрсе кайрĕ. Сасартĕк койка чĕтренчĕ, ассăн-ассăн, йывăррăн сывлани чуна çурасла илтĕнчĕ. Гриша сикса тăрса ларчĕ. Катенькăна сăнларĕ. Ерипен-ерипен куç харшине хăпартрĕ, тарăннăн сывласа илчĕ те тăна кĕчĕ. Ним шарламасăр, йăри-тавралла сиввĕн пăхкаларĕ те кайран шăппăн ыйтрĕ:

– Эпĕ ăçта?

– Çывăр, пĕтĕмпех кайран калăп, хĕрĕм.

Гриша ун валли шур çырли шывĕ илсе пычĕ.

– Ѕакна ĕç, хĕрĕм, çăмăлрах пулĕ.

Катя темиçе сыпкăм çăтрĕ те пуçне стена еннелле пăрчĕ. Унтан çаврăнса выртрĕ. Каçхине ăна ăшăтса-вĕрилентерсе ячĕ, çан-çурăмне, пит-куçне тар чăмăркки хупларĕ. Гриша тултан пăр йатрĕ, Катенькăн тарлă çамки çине пыра-пыра хучĕ, тӳрех ку ăçтан пулăштăр-ха? Çапах та ир енне хĕр, хăй сисмесĕр-туймасăр, канлĕн çывăрса кайрĕ, çавăн хыççăн Гриша та канлĕн тĕ-лĕрчĕ. Ирпе Гриша малтан вăранчĕ, сивĕ пек туйăнчĕ пӳртре, ун урине çеç ăшă, Найда ури вĕçĕнче выртать-мĕн. Кил хуçи кăмака хутса ярсанах, пӳрт ăшăнчĕ, чылаях та кирлĕ мар иккен вутти-шанки пĕчĕк пӳлĕме хăвăрт ăшăтма, çавнашкалахваскавлăн чей те вĕрерĕ. Чейнике Гриша чей курăкĕ ячĕ, пӳрте тутлă шăршă тапса тухрĕ. Катя кăвак куçĕсене чарса, мăччаналла тинкерсе выртать. Старик çакна асăрхасан, пысăк алюмини кружкăпа чей, тепĕр татăк хура çăкăр илсе, хĕре пырса пачĕ. Килте унăн çимелли урăх нимĕн те çукчĕ, çавăнпа вăл пулă патне кайса пăхма шутларĕ. Катя вĕри чее вĕре-вĕре сивĕтрĕ, унтан ăнтăлса ĕçрĕ. Гришшăн çурăмĕ хыçĕнче тытăнчăклă сасĕ илтĕнчĕ:

– Манăн лаша ăçта?

– Шыва путрĕ.

– Шел, юлашки çулсенче эпĕ ăна питĕ хăнăхнăччĕ, лайăх чупатчĕ, такама та хуса çитетчĕ.

Катьăн тĕксĕм куçĕсем шывланчĕç. Гриша йытă тирĕнчен çĕленĕ çăмламас кĕрĕкне тăхăнчĕ, йĕлтĕрне сырчĕ те ваксем патнелле вĕçтерчĕ. Виçĕ тетелĕ те пуш-пушах, вĕсене пĕр пулă та лекмен. Шывран туртса кăларнă чух шăнса ларчĕç, вăл хаклă япаласене рюкзака хучĕ. Киле илсе кайса типĕтме шутларĕ. Пÿртре, Гриша вĕсене кăмака çумне çакса хучĕ. Уçăлса çÿренĕ хыççăн çиес килчĕ унăн, пĕлет-ха, Катя та выçă. Гриша вара стена çумĕнче çакăнса тăракан ухута пăшалне илчĕ те тулалла тухрĕ, сунара килĕнчен аяккарах каяс темерĕ. Астăвать-ха вăл, çулла хĕрлĕ хурлăхан пуçтарнă чухне мулкач йăввине асăрханăччĕ. Гриша халь тÿрех çавăнталла çул тытрĕ, йытти малта ыткăнса пычĕ. Вĕсем чăтлăх патне çывхарма ĕлкĕреймерĕç, йытă вĕрсе те ячĕ, мулкачсене сасартăк сирпĕтсе кăларчĕ. Пĕрре пенипех Гриша пĕрне ÿкерчĕ. Çитĕ кунпа та тесе вăл хăвăртрах киле таврăнчĕ. Sĕрулми шуратрĕ. Питĕ тутлă шаркух пулчĕ, чи малтан вăл Катьăна антарса пачĕ. Хĕр-рыбнадзор тĕлĕннипе пуçне, хум çинчи кимĕ пек, пăркаларĕ.

– Тепĕр хĕрарăмран та лайăх пĕçерсе хатĕрленĕ иккен эс!

Мулкач шăммисене Найда, шăлĕсене шатăртаттарса, савăннипе хÿрине вылятса, кăшларĕ-çирĕ. Çисе тăрансан Катьăн та питне хĕрлĕ сăн кĕчĕ, çамки çине тар пĕрчисем тапса тухрĕç, çини усăллă пулчĕ, унтан кăмăл та çĕкленчĕ хĕрĕн...

– Мучи, эсĕ, ма авланмастăн? – ыйтрĕ вăл кулкаласа.

– Ан кул манран, эпĕ вĕт ватă, кама кирлĕ çĕрĕк тунката.

– Эпĕ эс ун пек каланипе килĕшместĕп, сана пĕччен пурăнма кичем-çке-ха.

– Хам арăм вилнĕ хыççăн никам та кирлĕ мар мана.

Катя йăл-йăл йăлкăшса кулчĕ, ырă чĕреллĕ старик ăна чунтан килĕшрĕ. Унтан хĕр, кăмака çумне çакнă тетелсене асăрхарĕ те:

– Мучи, лайăх пĕлетĕн вĕт эс, ун пек пысĕк тетелсемле пулă тытма юрамасть, вĕсен тĕршшĕ çирĕм пилĕк метртан ытла пулмалла мар, вĕсем санăн виçĕ хут вăрăмрах та пулĕ.

– Эпĕ ĕмĕрех çаксемпе тытатăп, мана ннкам та асăрхаттарман-ха.

– Кирлĕ пулнĕ.

Калаçу кун хыççăн малалла çыхăнмарĕ. Гриша канма шутларĕ, кăмака çумне вырăн сарчĕ те сарăлса выртрĕ, анчах ăна сыпă шăммисем канлĕх памарĕс, ниепле те тӳрех çывăрса каяймарĕ, унтан ыратнă вырăна массаж турĕ те спиртпа сăтăрчĕ, вара тин ваттăн пĕтĕм кĕлеткине çăмăллăх пулчĕ, вăл кĕçех тĕлĕрсе те кайрĕ. Ирхине вăрансан, алăк енче Найда нăйкăшса выртнине асăрхарĕ, Катя çывăрнĕ вырăн пушă пулнине курчĕ, хĕрĕн çакса хунă çи пуçĕсем те çукчĕ. Гриша, типме çакнĕ тетелсем çуккине пĕлсен, тем пулнĕ пек, тулалла вăркăнчĕ, унта çĕнĕ юр çинчи пĕртен-пĕр йĕр çеç хула-налла каятчĕ. Гришĕн чун-чĕринче тунсăх хăпарса çĕкленчĕ, мĕн тăвĕ-ха халь вăл тетелсемсĕр? Пулăсăр мĕнле пурăнмалла-ха ун? Ак еплерех тав турĕ хăйне вилĕмрен çăлнăшăн пархатарсăр хĕр. Эх, Катенька, Катенька... Тепĕр пĕр-икĕ эрнерен Гришăна районти халăх судне чĕнчĕс, пулă тытмалли тетелсемшĕн штраф тӳлеттерчĕç.




Эпĕ салтакра пĕрле тертленнĕ тантăшăм патне кайса курма шутларăм. Чылай пулать ĕнтĕ унпа тĕл пулманни. Пĕлес килет: мĕнле пурăнать-ши юлташăм? Çак шухăшпа автовокзала çитрĕм. Эй, çырлах, халăх ярмăркари пек хĕвĕшет! Шăрăха пула пурте сулхăналла туртăнаççĕ тата хăйсем.

Эпĕ те хӳме çумĕнчи çăка айне кайса тăтăм. Автобус киличчен чылай кĕтмелле-ха. Çапах кĕтсе илмех шутларăм. Пĕр тухнă-тăк, тӳсмеллех ĕнтĕ.

Акă, вăхăт çитрĕ курăнать, мана кирлĕ автобус вокзал умне çитсе тăчĕ. Эпĕ ун патнелле васкарăм. Анчах чупса çитнĕ тĕле автобуса çынсем тулма та ĕлкĕрнĕ, кĕме те май çук темелле. Аран-аран кайри алăк патне хĕсĕнтĕм. Унта та

михĕсем, рюкзаксем, сумкăсем урайĕнче лăках лараççĕ. Хăрах ура çинче тенĕ пек кайма тивет ĕнтĕ. Шăрăхпа тарласа пиçнĕ халăх шавлать кăна.

– Ăçта водитель?

– Ма вăхăтсăр уçнă алăкне?

– Хĕлле алăк уçасса кĕтсе шăнса хытатăн!

– Вĕсем ялан кутăн-пуçăн ĕçЛеççĕ!

– Пăхăр-ха унта, курăнмасть-и шофĕр?

Пĕр имшеркке хĕрарăм чăтаймарĕ пулмалла, пурне те илтĕнмелле пĕлтерчĕ:

– Çитет пирĕнтен мăшкăлласа, кайса килем-ха диспетчер патне...

Тепĕр темиçе минутран диспетчерскинчен водительпе иккĕш тухрĕç, аллисене сула-сула пĕр-пĕрне тем ăнлантараççĕ. Шофер хăй вырăнне лак! ларчĕ те сăран сумкине умне кăларса хучĕ.

– Камăн билет çук, хăвăртрах тӳлĕр! – кăшкăрчĕ вăл хулăн сассипе.

Кассăра билет илменнисем укçисемпе кăштăртатма тытăнчĕç, пĕр-пĕрин урлă водителе пачĕç, каялла билетсем куçрĕç.

– Пурте илчĕç-и? Астăвăр, малти алăкран билетсене тĕрĕслесе кăларатăп!

– Çитет пире пăчăхтарма, тапран хăвăртрах!

Водитель машина рычагне кăрт-карт туртрĕ те автобуса вырăнтан хускатрĕ. Машина ерипен хăвăртлăхне ӳстерме тытăнчĕ, кĕçех яка çул çине тухса, тикĕссĕн ярăна пуçларĕ. Кирлĕ чарăнусенче çынсем ана-ана юлчĕç, салон пушанса пычĕ, вара эпĕ те пĕр мучипе юнашар вырнаçрăм. Кĕçех çитме шутланă поселок та курăнчĕ. Çак вăхăтра ун çывахĕнчи ГАИ будкине пăсса пăрахнине асăрхарăм. Инçех те мар çĕннине хăпартаççĕ.

– Тĕлĕнмелле, – терĕм эпĕ, – пĕри çитмен, тепĕрне лартаççĕ.

Юнашар ларса пыракан мучи сасартӑк хускалса ипчӗ.

– Эс, йӗкӗт, кунтисем мар пулмалла, – темлерех пӗлтерӗшлӗн лӗхлетрӗ вӑл.

– Ҫапла, пулса курман эп ку таврара.

– Будка историне пурте пӗлеҫҫӗ кунта.

– Каласа пар эппин, вӑл вӑрӑмах мар пулсан. Интереслӗ пӗлме.

Мучи хӑйне итлекен пуррине кура палӑрмаллах чӗрӗлчӗ, куҫӗсем вӑрттӑнлӑх пӗлтересле ҫиҫсе илчӗҫ.

– Итле эппин, – калаҫӑва малалла чуптарчӗ вӑл. – Пирӗн пӗр ентеш, салтакран таврӑнсан, ГАИ ӗҫне вырнаҫрӗ. Малтанах пурте йӗркеллӗччӗ, водительсем те кӑмӑллӑччӗ унпа. Анчах ӑна лейтенант ҫӑлтӑрӗсене панӑ хыҫҫӑн шоферсен пурнӑҫӗ самай хӗсӗнчӗ, ирӗклӗ катаччи пӗтрӗ. Пӗрмай мӗнле те пулин сӑлтав тупса тытма тӑрӑшатчӗ, йӗрлесех тӑратчӗ, кирлӗ-кирлӗ мартанах пӗр шелсӗр штрафлатчӗ, прависене туртса илетчӗ, ҫӗнӗрен право хӳтӗлеме Чулхулана хӑвалатчӗ. Юлашкинчен пирӗн мужиксен чӑтӑмӗ пӗтрӗ. Пӗрре пуҫтарӑннӑ та хайхисем Пуриса тавӑрмалли меслет тупнӑ. Вӗсенчен иккӗшӗ ҫӗрле, ҫур ҫӗр иртсен, тавралӑх шӑпланнӑ хыҫҫӑн, машинӑпа каяш турттарса пырса, ӑна уҫӑ форточкӑран ҫав будка ӑшне пушатса хӑварнӑ.

Ирпе Пурис хӑй вырӑнне ӗҫе пырать те ҫӑра уҫҫине ҫавӑрса илме ӗлкӗрет кӑна, алӑк хӑех уҫӑлса каять. Шалтан шӑршлӑ каяш ун ҫине сирпӗнет. Аран анса тарать Пурис пусмапа. Ҫапах та ҫи-пуҫӗ каяшпа вараланса пӗтет. Ҫӑвӑнас шутпа йӗри-тавралла пӑхать – ниҫта та шыв ҫук. Шывӗ пулсан та, мӗн ҫӑвӑнни ӗнтӗ, ҫи-пуҫа улӑштармалла-ҫке. Вара Пурис пахчасем хыҫӗпе килнелле чупать. Ҫакна курса тӑракансем те пулнӑ. Сӑмах хӑвӑрт сарӑлчӗ поселокра. Ҫынсем уҫҫӑнах кулма пуҫларӗҫ лейтенантран.

Пурис чылай хушă çиллине нимпе пусарма пĕлмесĕр пурăнчĕ, ытларах пахчасем хыçĕпе çӳрерĕ, айăплисене темĕн пек шырарĕ пулин те, сутакан тупăнмарĕ.

Вун пилĕк талăка лекнисем темиçе хутчен те çуса тасатрĕç будкăна, шăрши çавах пĕтмест-мĕн. Юлашкинчен тӳсеймен, çĕнĕ будка лартма йышăннă. Куна вара пуçлăхсен куçне ан тиртĕр тесе ватаççĕ. Пуриса хăйне участок милицине куçарчĕç. Лăпланнă пекчĕ çавăнтанпа, çын шутне кĕрсе пыратчĕ...

Çак вăхăтра пирĕн автобус вырăна çитсе чарăнчĕ. Мучипе иксĕмĕр автобусран пĕрлех тухрăмăр. Ун халапĕнче тем каласа пĕтерменни сисĕнчĕ.

– Ку ĕçре те тем сиксе тухмарĕ пуле те ентешĕрпе? – ыйтрăм мучие тытса чарсах.

– Пулчĕ çав, улякка, пулчĕ.

– Мĕн-ши тата, мучи?

– Поселок кулли пулса тăчĕ Пурис. Юрĕ эппин, васкамастăн пулсан, йĕркипех каласа парам.

– Эп ниçта та васкамастăп-ха, хăвăр темле ĕнтĕ?

– Э-э, тăванăм, ман васкасси иртнĕ ĕнтĕ. Атя, ларар çав сак çине, пуçланă халапа вĕçлемеллех ăна. Вăт, итле. Вăл вăхăта эрехе хирĕç кампани пуçланчĕ. Пурис çĕнĕрен çуралнă пек вăр-варланче, çынсен килĕсене час-час тĕрĕслеме тытăнчĕ. Пĕрмай аншарли аппарачĕсене шырарĕ. Кама-кама штрафламарĕ-ши? Тĕрмене хуптарассипе хăратрĕ. Ăна курсан çынсем алăкĕсене питĕре пуçларĕç, кĕртме пăрахрĕç.

Пĕррехинче вăл çапла амăшĕ патне пырса кĕрет. Ун чухне вăл авланса тăван килĕнчен уйрăлса тухнăччĕ, патшалăх укçипе лартнă çуртра пурăнатчĕ. Вăл, амăшĕ патне кĕрет те, лешĕ пракапа аппаланнине курать. Вара çавна флягипех милици участокне илсе пырать, амăшне штрафлама ыйтать. Çакна илтсен милици начальнике тĕлĕннипе куçне чарсах пăрахать.

– Ара, санăн аннў-ске вăл, – тет ăна пуçлăх, – çавăн чухлĕ укçа ăçтан туптăр?

– Анне пулин, ма указа пăхăнмасть? Тӳлетĕр пĕрех хут. Çын мĕн калĕ тӳлеттерменнине пĕлсен? – парăнмасть Пурис.

– Йăтса килмелле пулман пракине. Тислĕк купи çине çеç тăкмаллаччĕ хуть.

– Эп – патшалăх ĕçĕнчи явапла çын, – тавăрать Пурис. – Урă пурнăçшăн кĕрешетĕп. Ун пек чухне тăван та тăван мар маншăн.

– Юрĕ-çке, юрĕ, – ирĕксĕрех килĕшет пуçлăх, – тӳлеттерĕпĕр çинех тăратăн пулсан...

Çавăн хыççăн ĕçĕнчи юлташĕсем те хисепрен кăларчĕç Пуриса. Поселок çыннисем те алă тытма пăрахрĕç ăна, сывлăх сунакан та сайра кам тупăнать. Пуçне усса утнăран çӳрет вара курпунланса.

– Шилков Пурис мар пулĕ те? – ыйтмасăр чăтаймарăм эпĕ мучирен.

– Ăхă, ăхă, Шилкка Пурисĕ. Эс ăçтан пĕлен тата ăна?

– А-а, салтакра пĕрле пулма тӳр килнĕччĕ.

– Эппин, ун патне килтĕн пулĕ-ха. Çула май утма, çуртне кăтартма пултаратăп, – терĕ мучи сӳрĕккĕнрех.

– Çук-ха, урăх ĕçпеччĕ, – суйрăм мучие, автобус чарăнăвĕ еннелле пăхнă май. Эпир ларса килнĕ автобус шăпах каялла çула тапранчĕ çав вăхăтра. Паян ку юлашки рейс пулнине тавçăрса, пĕтĕм вăйпа ун патнелле ыткăнтăм, ĕлкĕрейместĕмччĕ пуль те, автобусри пассажирсем эп чупнине курса водителе чарăнма ыйтрĕç курăнать. Машина çийĕнчех чарăнчĕ. Йывăррăн пашкаса кĕрсе лартăм вара. Халапçă мучие тепре курас шутпа-и, чӳречерен пăхрăм. Вăл мана асăрхарĕ те кăкăрĕ таран çĕкленĕ аллипе сулам пекки турĕ. Эп çăмăллăн сывласа ятăм.

# МАНĂÇЛĂХ

Лиза электричкăра канлĕн ларса пычĕ, аллинче – билет. Хăй шухăшласа хуни ăнăçлă пурнăçланнăшăн вăл кăмăллă юлчĕ. Пасарта çителĕклĕ япала туянчĕ. Унта хăйсен лавккинчен самай йӳнĕрех.

Ыйăннă пуçĕнче ырă шухăшсем явăнчĕç. Аслă хĕрне спорт костюме, кĕçĕн хĕрĕпе юратнă мăнукĕ валли те кăмăлĕсене каякан парнесем илчĕ. Лиза хăйне аваннăн туйрĕ, ларкăч çинче хыçалалла сĕвĕнсе ларчĕ, пĕтĕм ӳт-пĕвне халсăрлатрĕ. Хăйĕн кĕрӳшсем çинчен вĕчĕхленсе шутларĕ, парнесемсĕрех йӳнеçĕç.

Унăн шухăшĕсене вакун тăрăх чупса çӳрекен пĕр виçĕ çулсенчи хĕр пĕрчи татрĕ. Вăл савăклăн ахăлтатса ретсен хушшипе пĕрмай кумрĕ. Лиза вара хăйĕн юратнă пĕрремĕш хĕр-мăнукне аса илчĕ. Чунне ăшă çапрĕ, хăйне ыррăн туйрĕ вăл. Çак хĕр пĕрчине алла илсе ыталас килчĕ унăн. Лешĕ алла тытма памарĕ, тӳме евĕрлĕ куçĕпе ун çине кула-кула пăхрĕ, килĕшмесĕр пуçне пăркаларĕ те амăшĕ патне вакунăн тепĕр вĕçне чупса кайрĕ.

Чарăнура хĕр кĕчĕ, Лиза ларакан вырăнта пушă ларкăч пуррине асăрхарĕ.

– Ку вырăн ирĕклĕ-ши?

– Ăхă, тархасшăн, – пĕр харăссăн хуравларĕç икĕ хĕрарăм. Хĕр вĕсене хирĕç ларчĕ, япалисене юнашар хучĕ, пакетĕнчен апат-çимĕç кăларчĕ, лăпкăн çиме пуçларĕ, "Колокольчик" ятлă тутлă шывпа сыпкаларĕ. Кĕç алăк яри уçăлчĕ те, вакуна иккĕн кĕрсе тăчĕç, арçынпа хĕрарăм. Вĕсем уйрăлса икĕ еннелле кайрĕç. Электричкăпа час-час çӳрекенсем вĕсене сăнран лайăх палласçĕ.

– Пăхăр-ха, каллех упăшкипе арăмĕ кĕчĕç, вĕсем Улатăртан, ревизорсем, – систерчĕ пĕри.

Вакунăн тепĕр вĕçне çитсен хĕрарăм пурне те илтмелле:

– Тĕрĕслев, пассажирсене билетсем хатĕрлеме ыйтатăп! – терĕ,

Лизăн пĕтĕм шухăшĕ таçта вĕçсе кайрĕ. Билечĕ аллинчехчĕ-çке. Ăçта хума пултарнă çав хут татăкне тесе шухăшларĕ.

– Ах, ку манăçлăхпа, тĕп тăвать вăл хăçан та пулин мана.

Юнашар ларса пыракан хĕрарăм:

– Эс ан васка, теплĕн аса ил, – терĕ лăпкăн.

– Ку тискер пасар пурнăçĕнче пĕр вĕçĕм мĕнле сыхланса юлмалла-ши тесе шухăшлатăн, пуç çаврăнса каять.

Лиза кĕсйисене темиçе хутчен хыпашларĕ, анчах вĕсенче билет тупăнмарĕ. Сумкинчи ăпăр-тапăра пăтратрĕ, шел те, унта та билет курăнмарĕ. Ун патне леш арçын пырса тăчĕ, хыттăн каларĕ:

– Хĕрарăм, билет кăтартма ыйтатăп.

– Вăт шыратăп, ниепле те тупаймастăп, ак инкек пуç çине, – хăй япалисен хушшинче шырарĕ, пакечĕсемпе чăштăртатрĕ. – Ăçта хума пултартăм-ши çав билета?

– Хĕрарăм, билетсăр пассажир пулнăран штраф тӳлеме ыйтатăп.

Юнашар ларакан Лиза çулĕсенчи хĕрарăм хута кĕчĕ:

– Эпĕ курнă ун билетне, аллинчех тытса ларатчĕ, кайран çав хĕр пĕрчипе аппаланчĕ вал, – чупса çӳрекен хĕрача çине кăтартрĕ. – Ĕненĕр мана.

Арçын тимлĕн хĕрарăм пуçĕнчен пăхрĕ. Унтан пĕр сăмах каламасăр коридор тăрăх малалла тухмалли алăк патнелле кайрĕ, унта ăна пĕрле кĕнĕ хĕрарăм кĕтсе тăрать. Вĕсем тепĕр вакуна билетсем тĕрĕслеме кайрĕç. Çавах та Лизăна аван мар пулчĕ çынсен умĕнче. Хăйĕн манăçлăхĕ канăç памарĕ ăна. Эпĕ билета ăнсăртран ӳкернĕ пулĕ те, çав хирĕç ларан хĕр илнĕ ĕнтĕ ăна.

Пăсăлнă кăмăлпа таврăнчĕ Лиза килне. Ăна хĕрĕсем кĕтсе илчĕç, савăнăçлăн ыталаса илчĕç. Çакăн хыççăн тин чунĕ лăштах пулчĕ. Вăл илсе килнĕ парнесемпе япаласене кăларa пуçларĕ. Кайран кашнине парне парса тухрĕ. Сумкине йăлтах пушатнă хыççăн Лиза унăн тĕпĕнче билет выртнине асăрхарĕ. Хирĕç ларса пынă хĕр çинчен çавăн пек шутланăшăн вăл каллех аванмарланчĕ, пысăк çылăха кĕнĕн туйрĕ. Пĕтĕм пăтăрмах хĕрарăм манăçлăхĕ пирки пулчĕ.




Хальхи вăхăтра Шупашкартан Патăрьеле нушачăрмавсăрах çитме пулать. Пĕр тĕккеленмесĕр автобуса кĕр те ирĕклĕн ларса кай. Нухрачĕ çеç пултăр кĕсьере.

...Эпир, акă, мăшăрăмпа тата ывăлăмпа машинăра саркаланса ларса кил хапхи умнех çитрĕмĕр. Пире хирĕç, аллисене кĕпе аркипе шăлса, кĕçĕн хапхаран атте тухрĕ, савăннипе мана, унтан мăнукне хыттăн ыталарĕ, кинне вара алă тăсса пачĕ те кăмăллăн сĕнчĕ:

– Эсир кĕрĕр пӳрте, хуçаланăр, хăвăра килти пек тытăр, çиес-ĕçес пулсан, кухньăра пурте пур.

Атте мăнукне йăтса çенĕк еннелле ерипен утса кайрĕ. Унта вăл ачана тăратрĕ те кинĕ енне çаврăнса тепре каларĕ:

– Эсир мăнукпа кĕрĕр пӳрте, хуçаланăр, пирĕн ывăлпа кăштах ĕç пур-ха.

Лешсем курӑнми пулсан, атте мана савӑнӑҫлӑн каларӗ:

– Молодец, ывӑлӑм, вӑхӑтра ҫитрӗр. Атту пуҫа ватса ҫӳреттӗм ир-тенпех, кампа ӗҫ тумалла-ши теттӗм.

Атте мана вите еннелле ертсе кайрӗ.

– Акӑ, кур, ҫак сысна йӑлӑхтарса та тарӑхтарса ҫитерчӗ вӗт, эрне ӗнтӗ хирӗҫлет чупасшӑн, тытса чарма ҫук. Ҫитменне, апат ҫиме пӑрахрӗ, мур илесшӗ.

Сысна уҫӗ алӑкран урнӑ пек тухса сирпӗнчӗ те кил карти тӑрӑх ун-кун чупа пуҫларӗ. Эх, кумать, эх, чупать ҫӗмӗрттерсе, хыҫне пӑрӑҫ сапнӑ тейӗн, ниҫта кайса кӗме пӗлмест вӗт.

– Иккӗн те вӑй ҫитерес ҫук пулӗ ӑна тытса чарма? Эс, ывӑлӑм, ҫипуҫна улӑштарса тух-ха, вараланса пӗтӗн тата.

Эпӗ тумтире улӑштарса тухнӑ чухне атте сыснана тытасшӑн хӑвалатчӗ. Аллинче унӑн – вӗрен. Акӑ сысна ман ума чупса ҫитрӗ. Ӑна тытса чарас тесе, ун ҫине сикрӗм, анчах вӑл ҫакна сиснӗн вӑрт! кӑна айккинелле пӑрӑнчӗ. Эпӗ тӑрӑнса кайрӑм. Сысна хыҫӗнче пыракан атте манран такӑнчӗ те ҫӗре шаплатрӗ. Ҫав самантра пахчаран анне кӗчӗ. Эпир ҫӗртен тӑнине курчӗ те пӗтӗмпех ӑнланчӗ. Вара тӗлӗннипе пӗҫҫине ҫат! ҫапса илчӗ.

– Эй, апӑрша арҫынӗсем, сыснана ӑна хӑратса хӑваламаҫҫӗ, ачашласа лӑплантараҫҫӗ. Эс, ватти тата, йӳтемерӗн пуле те е мухмӑр чӗртме ӗл-кӗрейӗмерӗн-и-ха? Айтӑр, кӗрӗр пурте, кӑштах канса илӗр. Унччен Машка лӑпланӗ.

Эпир пӳртрен апатланса тухнӑ тӗле сысна хӗвел ӑшшинче нӑрхлатса тӑратчӗ. Ҫӑкӑр чӗлли тытнӑ анне, аллине тӑсса, ун патнелле утрӗ.

– Маш, маш, маш, эх, лайӑхскер, итлекенскер, тӑхтаха, хӑлху хыҫне хыҫса ярам, – анне нӑрх-нӑрх патне кукленсе ларчӗ, ҫӑкӑр хыптарчӗ. Машка нӑрхлатса лӑпкӑн тӑчӗ.

– Атте, сысна çавах та йытă мар вĕт, ăна çавăтса каяймăн, хăй пире сĕтĕрсе хăшкăлтарĕ.

– Мĕнех тăвăпăр-ши вара? Иван пире кĕтет вĕт, эп унпа калаçса татăлнă паян илсе пыратăп тесе.

– Итле-ха, пирĕн мотоцикл пур. Тен, унпа илсе каяр? Колыскăна вырттарар та, айда-пошел. Машкин урисене вара çыхăпăр, пуçне каскă тăхăнтартăпăр. Эп руль тытса пырам, эсĕ вара ăна ачашласа пыр.

Чăнахах çапла турăмăр. Машка пĕтĕм ял илтмелле çухăрнине пăхмасăр, урисене çыхрăмăр та коляскăна аран-аран вырнаçтартăмăр, пуçне каскă тăхăнтартăмăр. Эп руль умне лартăм та газ патăм хăвăртрах. Малтанах уçса хунă хапхаран вăштах тухса вĕçрĕмĕр. Тем вăхăтра пирĕн Машка çухăрма чарăнчĕ, килĕшрĕ пулмалла хăвăрт пыни.

Кĕçех Патăрьелне çитсе Ивансен хапхи умĕнче чарăмтăмăр. Пире хирĕç Иван хăй тухрĕ.

– Мĕн сыснасăрах çĕмĕрттерсе килнĕ эсир? Е урăх аçа тупрăр-и?

– Ара, курмастăн-им, ак, коляскăра улпут майри пек ларса килчĕ, каяннăй. Уç хапхуна хăвăртрах, лăплантартăр чунне.

Иван кил картине хăвăрт кĕрсе кайрĕ те хапхана яриех уçса ячĕ. Эпĕ мотоциклпа кил картине кĕтĕм. Халĕ ĕнтĕ виççĕн тан сыснана коляскăран антартăмăр та аçа сысна патне кĕртсе ятăмăр. Витерен кăмăллăн та ачашшăн нăрх-нăрх, нăрх-нăрх тенисем илтĕне пуçларĕç. Вара тинех çăмăллăн сывласа ятăмăр.

Эпир, мотоцикл тавра тăраканскерсем, сисмен те хăш вăхăтра Иван куçран çухалнине. Кăштахран ун сасси илтĕнчĕ:

– Кĕркури, Ваçлей, мĕн унта хытса тăратăр, кĕрĕр верандăна!

Эпир кĕтĕмĕр. Сĕтел çинче кăкшăмпа кăпăклă сăра ларать. Юнашарах – типĕтнĕ пулă.

– Ытла та ырă сăра тума пултарассĕ-çке чăваш хĕрарăмĕсем, – терĕ атте, кăпăклă сăрапа киленсе.

Шăкăл-шăкăл калаçса ларса, каç пулса пынине те сисмен. Тахçанах киле кайма вăхăт çитнĕ иккен. Хăпăл-хапăл тухса витене кĕтĕмĕр. Пирĕн сысна улăм çинче канлĕн выртать. Аçа сысни юнашар кăмăллăн нăрăхлатса тăрать.

Хамăр ял еннелле чиперех кайрăмăр. Машка юнтармарĕ те, çухăрашмарĕ те. Килте пире хирĕç çиллес сăн-питпĕ анне тухрĕ. Уяр çанталăкрах аслати пуласса часах сисрĕмĕр.

– Эс мĕн, ват супнă, килте ĕç çуккă тетĕн-им? Çын патĕнче намăса пĕлмесĕр кун кунлатăр! Эп кунта пуçа çĕклемесĕр пĕччен тапаçланатăп. Пĕлетĕн вĕт, çурхи кун çулталăк тăрантарнине. Килĕнче выльăхне те пăхмалла, пахчара та ĕçлемелле.

– Çитĕ-çке сана çĕтĕлсе. Пĕр кун каннăшăн темех пулмĕ. Ывăлсем хăнана килнĕ-çке...

– Ийя çав... эп мĕн... темех мар. Хăть пĕр ĕç тунă эсир, вăл та паха.

Коляскăри Машкăна витене кĕртсе ятăмăр.

– Кĕрĕр апата. Миçе хут ăшăтмарăм ĕнтĕ вăт-вăт килеççĕ тесе.

Сĕтел хушшине çемйипех пуçтарăнтăмăр. Шăкăл-шăкăл саванăçлă калаçса апатлантăмăр.

Тепĕр ирхине сыснана каллех Ивансем патне коляскăпа леçсе хăвартăмăр.

– Иван, Машкăна каç енне килсе илсе каятпăр, – терĕ атте кил хуçине.

Киле таврăнсан атте шăппăн манран ыйтрĕ:

– Сан унта Шупашкар эрехĕ пур-и?

– Пур, атте, ху пĕлетĕн, эп унсăрăн нихçан та килместĕп.

Эпĕ сумкăран «Акатуй» текеннине кăларса аттене тыттартăм. Хам аннепе мăшăрăма пулăшма пахчана тухрăм, çĕр чавма тытăнтăм.

Каç пулттипе Иван патне хамăр сыснана илме кайрăмăр. Кил хуçи пире хĕрĕнкĕн кĕтсе илчĕ.

– Ну, илсе кайма пултаратăр Машкăна. Урăх килмесен те юрать. Пĕр кунпа та çитетчĕ, тус-тантăш тесе икĕ куна ирĕк патăм.

– Турă сывлăх патăр сана, Иван.

– Сывлăхне валли Турă мар, эп хамах акă пĕр четвĕрт лешне хатĕрлесе лартрăм. Ăна ĕçмесĕр кăларса ямастăпах.

Юрла-юрла виççĕнех ĕçсе ятăмăр пĕр кăкшăма. Киле те каçхине юрласа таврăнтăмăр аттепе.

Тепĕр кунне ирех пахчана тухрăмăр. Анне апат хатĕрлесе юлчĕ. Кăштахран сехре хăпнăн чупса тухрĕ ман пата.

– Ăçта чикнĕ эсир Машкăна, ик пьянчук? Ниçта та çук вăл. Тен, илсе те килмен эсир ăна?

– Мĕнле илсе килмен? Çĕр чиперех ятамăр витене. Ĕненсен, ак, ывăлăмран ыйт.

– Çуккă çав, çуккă, – кускалать анне.

Эпир ушкăнпах кил картине утрăмăр. Сысна витере те курăнмарĕ, кил картинче те. Пахчана та тухман вăл. Аттепе урама тухрăмăр. Пĕри тăвалла, тепри аналла утрăмăр. Тăкăрлăксем ран кашни кил умне тĕрĕслерĕмĕр, ниçта та çук пирĕн сысна. Аптранипе пӳрт умĕнчи сак çине чĕлĕм туртма лартăмăр. Кĕçех кил картинчен нăрх-нăрх туни илтĕнчĕ. Аттепе иккĕн картишне чупса кĕтĕмĕр, сасă илтĕнекен гараж патне пытăмăр. Кунта шак хытса тăтăмăр. Пирĕн Машка мотоцикл коляскине вырнаçнă. Темле майпа хăех каска тăхăнма пултарнă тата. Эх, апăрша выльăхĕ, каллех улаха каясшăн имĕш. Çакăнтан аттепе иккĕн вархырăма тытсах култăмăр вара.

# ПУРНĂÇ МЫСКАРИСЕМ

## *УЛТАВ*

Пире, салтак ачисене, Канашра вăрăм симĕс казармăна илсе кĕртрĕç. Шалта туртса тултарнă вара – çынсен пичĕсем аран курăнаççĕ. Тĕтĕме пулах стенисем те чух çеç палăраççĕ. Казармăра икĕ хутлă путмарсем лартса тухнă. Вĕсем çинче пур çĕрте те пулас салтаксем тăсăлса выртаççĕ.

Пĕр вырăнта пушă вырăн тупса, иккĕмĕш хута хăпарса выртатăп. Кÿршĕм Патăрьел тăрăхĕнчен иккен, Конов хушаматлăскер. Эпир унпа хăвăртах пĕр чĕлхе тупрăмăр.

– Подъем! – илтĕнсе кайрĕ сасартăк.

Пурте пуçсене çĕклесе пăхатпăр. Икĕ хутлă путмарсем хушшинче карттуслă çамрăк ача тăрать. Пирĕн пек салтак ачи пулас.

– Ма пит тунсăхлă выртатăр?! Кăмăлăрсене çĕклеме пултаратăп! Килĕрсене тÿрех манса каятăр. Кăштах укçа кăна кирлĕ пулать. Ĕçме пĕлетĕр пуль-ха?

Вăл карттусне хыврĕ те коридор тăрăх уткаласа çÿреме тытăнчĕ. Анчах укçа пăрахса паракан пулмарĕ.

– Мĕн, ĕненместĕр-им? Эппин, пĕр-иккĕшне ман çумма тăратăр.

Путмарсем çинчен ун патне икĕ тĕреклĕ качча сиксе анчĕ. Вĕсем лешĕн хыççăн уткаласа çÿреме тытăнчĕç. Салтак ачисем хайхи çыннăн карттусне вуншар, пилĕкшер, виçшер тенкĕлĕх хут укçасем пăрахма пуçларĕç.

– Чун сисет. Ку çын улталать. Пĕр пус та памастăп, – тетĕп Конова.

Кÿршĕм манпа килĕшсе пуçне сĕлтет.

Укçа пухаканăн пуç хÿтти пĕр самантра тулса та ларать.

– Мĕн хытса тăратăр? Ĕçес-тĕк ĕçес! – хавхалантарчĕ вăл. Хут укçасем карттус çине тата ытларах ӳкме тытăнчĕç.

Кĕçех унăн икĕ кĕсйи те тулса ларчĕ.

– Ну, кам манпа пĕрле пырать?

Ун хыççăн пĕр вунă ача тухса утрĕ. Коновпа иксĕмĕр вĕсем çинчен манса та кайнăччĕ. Столовăя кайса килтĕмĕр те каллех путмарсем çине тăсăлса выртрăмăр. Пĕр сехет пек иртсен таврăнаççĕ хайхискерсем. Вĕсем хушшинче укçа пуçтараканни çук та. Эрех кĕленчисем те курăнмаççĕ.

– Мĕн пулчĕ? – ыйтатпăр çаксенчен.

Каласа пачĕç вара. Казармăран тухсан вĕсем ушкăнпа эрех лавкки еннеле утнă иккен. Пĕр йывăç çурт тĕлне çитсен, çаксен ертӳçи чарăнса тăрать. «Кăштах кĕтсе тăрăрха, – тет вăл салтак ачисене. – Эпĕ киле кĕрсе шыв ĕçсе тухам». Кусем урамрах тăрса юлаççĕ. Кĕтеççĕ, кĕтеççĕ çакна. Лешĕ çук та çук. Пĕри картишне кĕрсе пахать те курах каять: çурт алăкĕ çинче çăра çакăнса тăрать. Унтах тепĕр урама тухакан алăк пур иккен. Çавăнтан тухса тарнă та укçа пуçтаракан.

– Куç умĕнчех шик шăхăртса хăварчĕ, – кулянать эрех ĕçме ĕметленнисенчен пĕри.

– Пуçра çил шăхăрсан çапла пулать çав вăл, – тетĕп эпĕ Конова.

Кӳршĕ манпа килĕшсе пуçне сĕлтет.

## *ПУЛЛА ПУÇТАРĂННИ*

Алексей юлташĕсемпе пĕрле пулла кайма калаçса татăлчĕ. Камăн палатка тупса ăна вырăна илсе çитермеллине шăпа ярса та палăртрĕç вĕсем. Тепĕр кун ирхине кӳлĕ хĕрринче тĕл пулма калаçса таталчĕç.

Шăпи Алексее тухрĕ. Унăн прокат пунктне кайса виçĕ кунлăха палатка илмелле пулчĕ. Килĕнче тата кутамккине

пулӑ тытмалли хатӗрсем, ӗҫмелли-ҫимелли чикрӗ. Пуҫтаранса тухнӑччӗ, каялла таврӑнмалла пулчӗ: укҫине илме манӑ-мӗн. Васканӑ чухне яланах ҫапла пулать вал.

Алексей сехечӗ ҫине пӑхре: электричка киличчен вӑхӑт нумай юлман. Акӑ вакун ураписем кӑлтӑрт-кӑлтӑрт куҫни илтӗнсе кайрӗ, кӗҫ пуйӑсӗ хӑй те курӑнчӗ. «Васкас пулать, васкакан – пулӑран савӑнакан», – шухӑшларӗ Алексей, уттине хӑвӑртлатрӗ. Вал перрон ҫине чупса хӑпарса вакуна кӗме ӗлкӗрчӗ ҫеҫ, электричка тапранса та кайрӗ.

– Ҫапах та ӗлкӗртӗм-ха! – хӗпӗртерӗ вал, сӑмса тутрипе пичӗ ҫинчи тарне шӑлса илсе.

Вакун алӑке тачӑ хупӑнман-мӗн: кутамкки, хӗсӗнсе ларса, тулах тӑрса юлнӑ. Ҫурӑмӗ ҫинчи ҫӑкӗ хытӑ туртнипе Алексей хыҫалалла тайӑнчӗ. Хӑй те сисмерӗ, алӑк икӗ еннелле уҫӑлса кайрӗ те вӑл перрон ҫине тухса ӳкрӗ. Вакун алӑкӗ хальхинче тачах хупӑнчӗ. Тӑкӑлтӑк-тӑкӑлтак-тӑкӑлтӑк! васкарӗҫ малалла пуйӑс ураписем.

«Васкакан арӑмӗнчен савӑнман. Васкас мар-ха. Тепӗр сехетрен электричка татах пулать», – лӑплантарчӗ хӑйне Алексей.

# *КӐМАКАҪӐСЕМ*

Мишӑпа Гриша отпускра укҫа тума шутларӗҫ. Телее, вырма вӑхӑчӗ персе ҫитнӗ тата. Кайрӗҫ ҫаксем яла. Вырӑнти юлташлӑх председателе вӗсене ҫав тери хӗпӗртесе кӗтсе илчӗ. Хӗпӗртемесӗр! Ӗҫҫи тапхӑрӗнче ялта кашни ҫын шутлӑ. Пуҫлӑх каччӑсене ҫийӗнчех общежитие вырнаҫтарчӗ.

Кастеляншӑран простӑнь, минтер пичӗ илсе кусем ҫывӑрмалли вырӑна майласа хунӑччӗ ҫес, пӳлӗме ҫу ӑшшинчех ҫӗлӗк тӑхӑнса яна пӗр мучи пырса та кӗче. Тӳрех челӗм мӑкӑрлантарса ячӗ.

– Ыльӑмсем, сирӗн хушӑра кӑмака тӑвакансем ҫук-и? – ыйтрӗ вӑл ҫаварӗнчен тӗтӗм каларакан хатӗре пак-пак-пак ӗмҫе-ӗме. – Хӗлле шалт аптраса ҫитрӗм: хутса янӑ-яман пӳрте тӗтӗм палкаса тухать. Тӑм ҫӑрма пӗлекенни пирӗн хамар касрах пурччӗ те... Виҫӗмҫул месерле яла ӑсанчӗ ав.

– Кӑмака тӑвакансем-и?.. П-пур, – хӑй ыйтса ҫийӗнчех хӑех хуравларӗ Миша.

Мучи килӗ юнашарах-мӗн. Кӗнӗ-кӗмен сӗтел айӗнчен пӗр кӗленче хӗрлӗ эрех кӑларса лартрӗ.

– Ку алӑ-урана ҫемҫетмелех пултӑр.

– Мӗнле-ха капла? Ӗҫне тӑвиччен...

Каласа пӗтерме памарӗ, тӑк! тӗкрӗ Миша Гришӑна айӑкӗнчен. «Ан шарла», – терӗ пуль ӗнтӗ.

Акӑ вӗсем кашни пӗрер стакан пушатрӗҫ те хӑяр ҫиме тытӑнчӗҫ. Ҫатӑрт-ҫатӑрт-ҫатӑрт! – хӑлхисенче ҫав сасӑ анчах.

Ҫӑварӗсене вылятса ывӑнсан, Миша мӑрье пӑсма хӑпарса кайрӗ, Гриша пӳртрех ӑшталанма тытӑнче. Кӑмакине пӑсса кирпӗчӗсене пӗр ҫӗререх майлаштарса хунӑччӗ ҫеҫ, алкумӗнче хӗрарӑм сасси илтӗнчӗ:

– Михвать, сан патӑнта кӑмака тӑвакансем пур тем?

– Вара мӗскер?

– Ман пата яр-ха вӗсене.

– Эсӗ, Маруҫ, ухмаха ермен пуле те? Малтан хамӑнне туса пӗтерччӗр-ха.

Пӳрте кил хуҫипе пӗрле кӗпе ҫаннисене таварса янӑ мӑнтӑр хӗрарам кӗрсе тачӗ.

– Атьӑр, пуҫтарӑнӑр, – терӗ вӑл Мишӑпа Гришӑна приказ панӑ пек. Мучи хирӗҫленине пӑхмасӑр, иккӗшне те ҫавӑтса тухса кайрӗ. Лешсен пӑхӑнасси кӑна юлчӗ.

Маруҫ инке виҫӗ кил урлӑ пурӑнать иккен. Алӑкран кӗрсенех кусен куҫӗ алчӑраса кайрӗ: пӳлем варринчи ана пысӑкӑш сӗтел ҫинче ӗҫме-ҫиме туллиех, вунӑ ҫынна та ҫитет-тӗр.

– Кусене йăлтах сире валли хатĕрленĕ, – терĕ кил хуçи хĕрарăмĕ, туссене çурăмĕнчен лăп-лăп-лăп ачашласа кĕрекене лартнă май. Шифоньертан кĕленчепе сăмакун кăларчĕ.

Хăйсене çакнашкал хапăл туса кĕтсе илнипе хĕпĕртенĕ туссем черккесене ярса пакă симес шĕвеке умлă-хыçлă пушатрĕç, ăшалакă чăххине, ытти çимĕçне ним хăварми çисе ячĕç. Хырăмĕсене тултарсан, кусен хускалас та килмерĕ хайхи.

– Маруç инке, кăмакине хăвах пăс-ха. Ыран вара купалама тытăнăпăр, – терĕç вĕсем тухса суланнă май.

«Вуник кăшăллă...» юрласа утрĕç вĕсем ял урамĕ тăрăх. Аран-аран общежитие çиткелесен, вырăнĕсем çине лаплатрĕç те тепĕр кунччен те вăранмарĕç.

Ирхине кусем куçĕсене уçнă-уçман хăйсем умĕнче тăракан çамрăк хĕрарăма курах кайрĕç.

– Кăмака тăвакансем эсир пулатăр-и? – ыйтрĕ чиперкке.

– Эпир. Вара мĕн?

– Манан кăмакана юсаса памăр-ши тетĕп те.

– Сан пек хитре хĕрарăма ма юсаса парас мар. Эпир хаваспах!

Гришăпа Миша кăмакине хăвăртах пăсса пăрахрĕç. Те хастарлахĕпе, те мухмăрĕпе йĕп-йĕпе тара ӳкнĕскерсем, ларса пирус мăкăрлантарса ячĕç.

– Ай, эсир ман кăмакана пăсса та хунă-çке! Маттур! – хĕпĕртерĕ пахчаран тин килсе кĕнĕ килхуçи хĕрарăмĕ. – Эппин, паянлăха çитĕ, канăр. Авă, мунча та пулчĕ.

Гришăпа Миша мунчара ахлатса та ухлатса çапăнса, шăмми-шаккине милĕкпе, мунчалапа хăмлентерсе-хĕретсе таврăннă çĕрелле чипер хĕрарăм сĕтелĕ тĕрлĕ çимĕçпе тулса та ларнă. Епле кăна ĕлкĕрет!

Кусем хуçи хушмасăрах кĕрекене кĕрсе ларчĕç те техĕмлĕ апата пĕтĕрме тытăнчеç, эрехне те пехлерĕç. Вĕсем

ĕçсе-çисе урама тухнă чух çумăр пуçланнăччĕ ĕнтĕ. Общежитие васкасарах утрĕç.

– Гриша, эсĕ кăмака тума ăçта вĕреннĕ вара? – пӳлĕме кĕрсе вырăн çине улпут пек тăсăлса выртсан кăсăкланчĕ Миша.

– Ăçта вĕреннĕ-ĕ? Эпĕ кăмака тума пĕлместĕп.

– Менле – пĕлместĕн?.. Эпĕ те пĕлместĕп... Эсĕ пĕлтĕр отпускра Атăл леш енче кăмака нумай турăм терĕн мар-и вара?

– Кăмака нумай турăм темен эп сана! Кăмпа нумай тупрăм терĕм! Эх, илтмен хăлха! Эпĕ пур, сана шаннă. Тытса тĕвеççĕ ак иксĕмĕре те. Атя, тухса шăвăнар хăвăртрах ку ялтан.

Гришăпа Миша, вăрăсем пек ун-кун пăхкаласа, пахчасем хыçĕпе аслă çул хĕрринелле утрĕç.

# *ПИЛĔК ДОЛЛАР*

ПАЯН цехра аслă мастер ĕç укçин шутне кăтартакан хутсене салатса пачĕ. Йĕрке тăрăх, вĕсене ĕç укçи парас умĕнхи кун валеçетчĕç. Паян вара ĕç эрнин юлашки кунĕ, çавăнпа ĕç укçине паян, эрне кун, пама шутланă ĕнтĕ. Анчах ун пирки хальлĕхе никам та пĕлмен-ха. Çапах та рабочий улттăмĕш туйăм пур пулĕ, паянах парасса туять. Пĕри чăтаймасăр кантура чупса кайса килнĕ, ырă хыпара ыйтса пĕлнĕ, ĕç укçине те илме ĕлкĕрнĕ. Вара пĕрин хыççăн тепри черетпе кассăна туртăнчĕç, ун умĕнче черетленсе тăмасăр, чăтăмсăр тĕккелешмесĕр смена вĕçлениччен пĕтĕм цех çынни ĕç укçи илме ĕлкĕрчĕ. Коллективе вĕсен тахçанах йĕркеленнĕскер, туслăскер, тĕрлĕ çулсенчи çынсенчен тытăнса тăрать пулин те, пĕрпĕрне хисеплеççĕ кунта, ăмсану-кĕвĕçӳ çук. Çавăнпа та ĕнтĕ пĕр шавсăр илчĕ эртел ĕç уксине.

Ĕçе вĕçлесе душ кĕрсе тухнӑ хыççӑн пĕтĕм шӑмшак çӑмӑлланать. Проходной алӑкĕнчен тухнӑ хыççӑн Костя ирĕклĕн сывласа ячĕ. Кĕр кунĕсем çитнĕрен сывлӑш уçӑ. Тинех çуллахи шӑрӑх кунсем иртрĕç. Атту сывлама та çукчĕ вĕт, ниçта та каяс килместчĕ, нимĕн тӑвас кӑмӑл çукчĕ. Вара ирĕксĕрех Царицино пĕви хĕррине кайса выртаттӑн, шыва кĕреттĕн, хĕртĕнеттĕн е, кирлех пулсан, йывӑççсен сулхӑнĕнче киленеттĕн. Халĕ вара унсӑрах çӑмӑл.

Кĕсьере укçа пуртан чун савӑнать. Общежитие çитсен вӑл хӑйсен пӳлĕмне хӑпарчĕ. Унта никам та çукчĕ. Костя укçана тумбочкӑна хучĕ те, кӑштах уйӑрса илсе хирĕçри гастронома тухрĕ, мĕн кирлине туянса каялла таврӑнчĕ, каçхи апат хатĕрлеме тытӑнчĕ. Кӑштах çĕр улми тураса ячĕ, лавккара туяннӑ икĕ пакета уçса шыва сиктерчĕ. Кӑштахран яшка пиçрĕ те. Иккĕмĕш апат валли вӑл макарон ӑшаларĕ.

Алат хатĕрлесе çитернĕ тĕле Толя кĕрсе тӑчĕ. Сӑн-пичĕ унӑн яланах сывӑ та савӑк кулӑллӑ. Уçӑ чунлӑ çын теççĕ ун пеккисене.

– Туятӑп, эсир паян ĕç укçи илнĕ.

– Ӑçтан пĕлетĕн вара?

– Курӑнать çав, курӑнать: пирĕн апат-çимĕç пĕтнĕччĕ, эс вара...

– Апат хатĕрĕсем пуррине мĕн çиттĕр ĕнтĕ.

– Вӑт аван, пире те ĕç укçи пачĕç. Ӑçта кайса чуна кантармалли çинчен шутламалли çеç юлать.

– Вӑл тармĕ-ха. Малтан ларса апатлан, иккĕн çиме кӑмӑллӑрах.

Вĕсем хаваспах апата ларчĕç. Яшка тутлӑлатма паян соусĕ те, майонезĕ те пур. Юлашки кунсенче тӑраничченçименччĕ-ха. Çӑра чей те ĕçрĕç, сĕтел хушшинчен тарласах тухрĕç, тарланӑ пичĕсемпе мӑйĕсене ал шӑллипе типĕтрĕç.

– Халĕ калама пултаратӑн, мĕн шутласа хунӑ эсĕ, Толя? – ыйтрĕ Костя.

– «Кама» ресторана каяс мар-ши тетĕп те.

– Толя, аван пĕлетĕн вĕт, унта çулсенчи çынсем çÿреççĕ, иртнинче те никампа ташлама çукчĕ, çитменнине, алăк умĕнче черет çитессе чылай кĕтме тивет.

– Юнашарах «Таганка» метро станцийĕ, çавăнпа яланах халăх лăк тулли унта:

– Эппин çамрăксем чылайăн пуçтарăнакан вырăн шырама тивет.

– Айта Пролетарскине, унта кафе пысăк, нумай çын вырнаçать.

– Мантăн-им, мĕн чухлĕ вăхăт иртертĕмĕр алăк умĕнчи черетре тăрса?

– Шел, пирĕн кунта, Печатникре, канăçлă канса ларма пĕр ресторан-кафе те çук.

– Нимĕн те тăваймăн, çĕнĕ район.

– Мĕн чухлĕ çурт лартрĕç, ун пирки шутламан пулмалла.

– Ан кулян, вăхăчĕпе пурте пулĕ.

Калаçса вĕсем сарман вырăнĕсем çине хывăнмасăрах выртрĕç, хальлĕхе ним тума та пĕлмерĕç-ха, ăçта каяссине те палăртаймарĕç.

– Апла пулсан хăв суйла, – терĕ Толя аптранă енне.

– Шутлама тивет.

Пĕр кана пÿлĕмре шăплăх тăчĕ. Ăна урамран илтĕнекен машина сассисемсĕр пуçне нимĕн те татмарĕ. Выртсан-выртсан Толя савăнăçлăн сиксе тăчĕ:

– Пачах пуçран тухса ÿкнĕ, тинех аса илтĕм. Уйăх каялла, эс канура ялта пулнă чухне, Сашăн çуралнă кунĕ пулнăччĕ.

– Мĕнех вара?

– Çуралнă кунне палăртма вăл пĕрле ĕçлекенсене пурне те Таганкăри «Сокол» ресторана чĕннĕччĕ. Унта ресторанĕ анлă, халăх нумай пулин те, черет вăрăм мар, ĕçмелли-çимелли те йÿнĕрех.

– Килĕшмелле, айта, кайса курар эппин.

Вĕсем хăпартлансах тирпейленсе пуçтарăнма тытăнчĕç, пĕр-пĕрне çапăнса пӳлĕмрен пӳлĕме кумрĕç.

– Толя, эс ирпе хырăнтăн-çке.

– Шăрт хăвăрт ӳсет çав.

– Эс шурă çӳçлĕ, шăртсем палăрмаççĕ.

– Хĕрсемпе чуп тунă чухне тирет тесе кăмăлсăрланаççĕ, кĕске шăрт вăл наждак хучĕ пекех-çке.

Вĕсем çĕкленӳллĕ кăмăлпа «Текстильщик» метро станцине кĕчĕç, «Таганкăра» тухрĕç. Вĕсен пичĕсене уçă сывлăш çупăрларĕ, мĕншĕн тесен умра юхан шыв сарăлса выртать. Çыранра пĕр пăрахут ларать, ун çине «Сокол» ресторан тесе çырнă. Трап тăрăх хăпарнă чухне вĕсем офицер тӳммиллĕ ушкăна асăрхарĕç, темĕнле уяв палăртаççĕ пулмалла. Черет хăвăрт шăвать. Кĕçех икĕ йĕкĕт зала кĕчĕ. Вĕсем пĕр кĕтесри чӳрече умĕнчи пушаннă сĕтеле йышăнчĕç. Толя официант пырса панă меню хутне алла илчĕ те ăна пĕрре çӳлтен аялалла, тепре аялтан çӳлелле вуласа тухрĕ, пуçне пăркаласа илчĕ.

– Костя, мĕн илĕпĕр?

– Хăвна мĕн килĕшет, çавна суйла, хăв пĕлетĕн, эпĕ сан пекех апат тиркеместĕп. Вăл енчен сан опыт пысăкрах, эс Мускавра пĕтĕм ресторан-кафене, столовăйне çитсе курнă.

Вĕсем калаçса татăлнине пĕлнĕ пекех официант пырса тăчĕ.

– Итлетĕп сире.

– Чи малтан виççĕр грамм шурă эрех тата пару какайĕпе помидор салачĕ илсе килĕр, пĕр кăкшăм компот чармĕччĕ, унтан çĕр улмипе гуляш тата Куба ромĕ илсе килме пултаратăр.

Официант çавăнтах пĕтĕм хакне шутларĕ

– Ма васкатăр?

– Манăн клиентсем нумай, çавăнпа маларах татăлни маншăн канăçлăрах пулĕ.

– Ме, тытăр эппин, пуриншĕн те тав.

– Канăр. Хăвăра тав.

Вĕсем чăнласах канчĕç. Пĕрмай ташă çемми пулнипе усă курса иккĕш те хĕрсене ташăсене чĕнсе кăларчĕç, калаçрĕç, кулчĕç, савăнчĕç. Каччăсем канма ларнă вăхăтра вĕсен сĕтелĕ патне официант пычĕ:

– Каçарăр та, залра пушă вырăн çук, сирĕн сĕтел хушшине çав икĕ хĕрарăма чĕнме юрать-ши, чăрмантармĕç-и вĕсем сире? – терĕ вăл алăк патĕнче таракан икĕ хĕрарăм еннелле пуçĕпе сĕлтсе кăтартса.

– Чĕнме пултаратăр, пиртен чару çук.

Кĕçех официант лешсене ертсе пычĕ. Вĕсем ирĕклĕ пукансем çине вырнаçса ларчĕç.

– Салам, йĕкĕтсем! Эпир сире чăрмантармăпăр-и?

– Çук, çук, тархасшăн, вăхăт савăклăрах иртĕ.

Çав самантра Толя черккесене ром тултарчĕ. Темĕнле хăйне май пулса тухрĕ, тĕксĕмрех сăнли Тольăпа калаçма пуçларĕ, çутă сăнли – Костьăпа. Кун хыççăн вăхăт иртни те сисĕнмерĕ. Хĕрарăмсем яшсенчен кăшт аслăрах пулин те, вĕсемпе калаçма, ташлама, пĕрле ĕçсе-çиме кăмăллăрах, савăкрах пулчĕ. Ташăсен хушшинчи пĕр чарăнура Костя патне негр пычĕ те вырăс сăмахĕсене пăсарах:

– Тархасшăн пулăш, манăн эрех сыпас килет тата хамăн хĕре шампань эрехĕпе сăйлас кăмăл пур, – терĕ.

– Мĕнпе пулăшма пултарăп?

– Манăн долларсем пур, анчах кунта вĕсемпе памаççĕ.

– Миçе тенкĕ кирлĕччĕ?

– Пилĕк тенкĕ çитет.

Костя негра пилĕк тенкĕ кăларса тыттарчĕ. Лешĕ савăнсах кайрĕ, шурă шăлĕсене кăтартса тав турĕ, хăй те хирĕçле пилĕк доллар кăларса пачĕ.

– Пуçтарса чик хăвăн долларна. Мĕн тума кирлĕ вăл мана?

– Çук, ун пек пултараймастăп эпĕ. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç теççĕ-çке сирĕн, вăт çавă пултăр.

– Сувенир вырăнне пулсан çеç...

Костя доллара муталаса кĕсйине чикрĕ те ташша пикенчĕ. Ресторан ерипен пушанса пычĕ. Вĕсем те тăваттăн урама тухрĕç. Костя пĕр хĕрарăмĕпе таксипе ларса кайрĕ, Толя – тепринпе. Кану кунĕсене иккĕш те хĕрарăмсем патĕнче ирттерчĕç, кăмăлĕсем тулмаллах киленчĕç.

Вырсарни кун каçхине общежитие малтан Костя çитрĕ. Сăн-питĕнче самаях ывăнни палăрать, уринчен ури аран иртет. Вăл кĕсйинчи муталанчăк доллара кăларчĕ те тумбочка çине ывăтса ячĕ, вара хывăнмасăрах вырăн çине выртрĕ. Юлташне кĕтсе илес терĕ пулмалла. Тĕлĕрсе каяйманччĕ, алăк сасси илтĕнчĕ. Костя хăрах куçне хĕсĕккĕн уçса пăхрĕ. Толя имĕш.

– Эх, аван иртрĕç кану кунĕсем! Кун пек савăшу тахçантанпах пулманччĕ-ха, – кăмăллăн пĕлтерчĕ Толя.

– Эпĕ те санран кая мар савăшрăм пулĕ, – ыйăх вĕççĕн пăшăлтатрĕ Костя.

Вĕсем нумай калаçмарĕç, вырăнĕсене сарчĕç те кĕçех тарăн ыйха путрĕç. Çывăрса тăраннăскерсем ирпе кăмăллăн ĕçе пуçтарăнчĕç. Костя муталанчăк доллара асăрхарĕ те ăна илсе çўпĕ витрине пăрахрĕ.

– Эс мĕн валютăпа вылятăн?

– Мĕн тăвас ман унпа?

– Эрне кун эпир ăçта пулнине ас тăватăн-и?

– Ас тумасăр.

– Вăт çав ресторана хирĕç «Березка» лавкка пур, çавăнта тавар долларпа çеç сутаççĕ тет.

Ĕç хыççăн Костя çăвăнчĕ те шурă кĕпе, чипер костюм тăхăнчĕ, галстук çыхрĕ. Ку мăйкăча юратсах каймасть вăл,

анчах мĕн тăвăн, ют халăх умĕнче ĕлккенлĕн курăнас килчĕ унăн. Лавкки, чăнах та, çыран хĕрринче вырнаçнă. Тап-таса та йăлтăркка кунта. Алăкра швейцар тăрать, вăл сывлăх сунсах кĕртсе ячĕ. Ай-уй, мĕн кăна çук кунта! Куç-пуç алчăраса каять тĕлĕннипе. Костя чылайччен пăхса çӳрерĕ, юлашкинчен пĕр кĕпе, пĕр мăшăр перчетке тата пĕр галстук суйласа илчĕ. Пĕрле вĕсем шăп та лăп пилĕк доллар тăраççĕ.

– Мана, тархасшăн, çав симĕс тĕслĕ кĕпене, тăххăрмĕш виçеллĕ перчеткепе тата çав хĕрринчи пăнчăллă галстука парăр.

– Гражданин, пĕр самант тăхтăр-ха, – илтĕнчĕ хыçра арçын сасси.

Костя çаврăнса тăчĕ. Ун патне алăкран кĕнĕ хура тумлă икĕ арçын çывхарать.

– Çамрăк çын, айтăр пирĕнпе ав çавăнта, шаларах.

Костя пĕр сăмахсăрах, пĕр хирĕçлемесĕр вĕсемпе утрĕ. Вĕсем кĕнĕ пӳлĕмре килти пекех хăтлă, телевизор çунать.

– Халь кала, ăçтан сирĕн валюта?

Костя тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ, анчах ăна ĕненмерĕç пулмалла, татах та татах ыйтрĕç. Вăл вара пĕрмаях пĕр историне каласа пачĕ, ывăнсах çитрĕ пĕр япалана темиçе хут ăнлантарса. Икĕ сехет те иртрĕ çапла. Юлашкинчен ку ăна йăлăхтарса çитерчĕ. Те тарăхнипе, те кӳреннипе вăл чăтаймарĕ, тархасласах ыйтрĕ:

– Илĕр эсир çав долларсене хăвăрах, кирлĕ мар вĕсем мана, анчах мана кунтан ярăр.

Лешсем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç, тем пăшăлтатрĕç, вара кайма ирĕк пачĕç. Костя çил пек тухса вĕçрĕ «Березка» лавккаран. Урăх нихăçан та ура ярса пусман вăл унта.

# ТУПМАЛЛИ

ТУМАН ТИХА ПИЛЁКНЕ ХУҪСАН ---------------------- 3
ВӐЙӐРАН ВӐКӐР ------------------------------------- 5
ЧЁРЁ ТАВАР -----------------------------------------10
ХИТРЕ ХЁР------------------------------------------16
ЧЕЕ ШУЛЁКСЕМ -----------------------------------20
ҪУР ТЕНКЁ------------------------------------------26
ЙЁКЕХӲРЕ -----------------------------------------29
ҪЁПРЕ ---------------------------------------------32
ТАБЛЕТКӐСЕМ -------------------------------------34
КАССА ВӐРРИСЕМ-------------------------------37
МУРКӐПА ШУРКА -------------------------------39
ПУСКИЛ ---------------------------------------------41
ЭХ, КАТЕНЬКА, КАТЕНЬКА... ---------------------44
ӐНЛАНТӐМ------------------------------------------50
МАНӐҪЛӐХ ------------------------------------------55
МАШКА---------------------------------------------57
ПУРНӐҪ МЫСКАРИСЕМ. *УЛТАВ* ------------------62
*ПУЛЛА ПУҪТАРӐННИ* ----------------------------- *63*
*КӐМАКАҪӐСЕМ*------------------------------------*64*
*ПИЛЁК ДОЛЛАР* ------------------------------------*67*

50,00

**Жирнов-Ибресь Николай Трофимович**

**ВӐЙӐРАН ВӐКӐР**

Художник *В.Н. Трофимов*

Подписано в печать 26.09.2011. Формат 60х84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Физ. печ. л. 4,75. Тираж 300 экз. Заказ № 289.

Отпечатано с готового оригинал-макета
в типографии ИП Сорокина А.В. "Новое Время".
428034, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 41-17-87. E-mail: newtime1@mail.ru.

50,20